ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июль 30 КĔÇНЕРНИКУН № 148 (9057)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паян Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарчĕ

Ленинизм ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Китай халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председательне Мао Цзе-дун юлташа

Китай Халăх Республикин Государство администраци совечĕн Премьерне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Чжоу Энь-лай юлташа

Корейăра перемири тума алă пусни тата вăрçă чарăнни Корейăн паттăрла халăхĕн тата Китай халăхĕн мухтавлă доброволецĕсен аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

Совет Союзĕнчи халăхсем аслă Китай халăхне Инçет Хĕвелтухăçĕнче тата пĕтĕм тĕнчере мире хӳтĕлес ĕçре çавăн пек пысăк çĕнтерӳ тунă ятпа саламласа ырă сунаççĕ.

Перемири тума алă пуснă тата вăрçма чарăннă май мире юратакан мĕнпур халăхсем умне миршĕн, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре тунă çак çитĕнӳсене çирĕплетес задачăсем тухса тăраççĕ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. МАЛЕНКОВ.
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. МОЛОТОВ.

Мускав, 1953 çулхи июлĕн 28-мĕшĕ.

Çур ĕмĕр хушшинчи кĕрешӳпе çĕнтерӳсем

Совет Союзĕнчи Коммунистсен мухтавлă партийĕ тата пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем паян партин Иккĕмĕш съезчĕ уçăлнăранпа 50 çул çитнине чаплăн паллă тăваççĕ. Çак кун пирĕн парти пурнăçĕнчи питех те паллă кун пулса тăрать. Партин çав съездĕнче пролетарилле марксистла парти, çĕнĕ йышши парти туса йĕркеленĕ. Вăл парти пирĕн халăха 1917 çулта Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерессе патне илсе çитерчĕ, пролетариат диктатурине туса хучĕ, хамăр çĕршывра социализмла общество туса çитерессине пурнăçларĕ.

Партин II-мĕш съезчĕн историлле пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Унта марксистла партин идеологилле принципĕсем, Ленин ертсе пынипе «Искра» хатĕрленĕ принципсем çĕнтерӳ тунă, рабочи класс партийĕн революцилле программине йышăннă. Ленинпа ленинла «Искрăн» идеологилле принципĕсем партин Иккĕмĕш съездĕнче çĕнтерӳ туни пирĕн партипе революци аталанăвĕшĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Рабочи класс партине туса йĕркелес тĕлĕшпе Ленин палăртнă планра партин организацилле принципĕсене тĕплĕн кăтартса панă, парти ролĕ çинчен марксистла тĕп положенисене çутатса панă. Унта парти рабочи класăн малта пыракан тата ăнлануллă отрячĕ, малта пыракан теорипе, общество аталанăвĕн законĕсене пĕлнипе, класс кĕрешĕвĕн законĕсене пĕлнипе, революцилле юхăм опычĕпе хĕçпăшалланнă отрячĕ пулса тăнине кăтартса панă. Çавăн пек парти кăна рабочи класа малалла илсе пыма, унăн кĕрешĕвне ертсе пыма пултарнă.

Аллă çул каялла Ленин, партин Иккĕмĕш съездĕнче, парти речĕсен пĕрлĕхне сыхласа хăварма кирлине, партире пĕрлĕхлĕ пролетарилле дисциплина тата парти пурнăçĕн çирĕп нормисем пулмаллине, вĕсем партин пур членĕсемшĕн те — руководительсемшĕн те, рядовой членсемшĕн те—пĕр пекех обязательнă пулмаллине кăтартса панă. Çак съездрах Ленин парти членĕн хисеплĕ ятне çӳлте тытма вĕрентнĕ, партин кашни членĕ партишĕн ответлă пулмалла, парти вара хăйĕн кашни членĕшĕн ответ тытмалла, тенĕ. Ленинăн çак вĕрентĕвĕ пирĕн партишĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Парти пролетариатăн ертсе пыракан организацийĕ, пролетариат аллинчи тĕп хĕçпăшал пулса тăни çинчен, пролетариат диктатуришĕн пыракан, хальхи вăхăтра вара — коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешӳре çав хĕçпăшалсăр çĕнтерме çукки çинчен калакан вĕрентĕве Ленин марксизм историйĕнче пирвайхи хут туса хатĕрленĕ.

Вырăссен пĕррĕмĕш буржуалла-демократилле революцийĕ аталанса пынă вăхăтра Ленин партипе рабочи класăн тактики мĕнле пулмаллине чаплăн кăтартса панă, Коммунистсен партийĕн политикăлла (тактикăлла) никĕсĕсене туса панă. Çапла майпа вăл марксизма пролетарилле революцин çĕнĕ теорийĕпе пуянлатнă, çав теорисĕр 1917 çулта капитализма çĕнтерме май пулман пулĕччĕ. Столыпинла реакцин йывăр та тĕттĕм çулĕсенче Ленин партин теорилле никĕсĕсене—диалектикăлла тата историлле материализма хӳтĕлесе хăварса малалла аталантарнă. Партин. Ленин туса хатĕрленĕ идеологилле, организацилле, политикăлла (тактикăлла) тата теорилле никĕсĕсем çине таянса, пирĕн парти пролетариат кĕрешĕвне ăнăçлăн ертсе пынă.

1912 çулта Прагăри конференципе РСДРП-ран меньшевик-ликвидаторсене хăваласа кăларнă хыççăн большевиксен партийĕ татăклăнах хăйне уйрăм парти пулса пурăнма тытăннă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, тенилле Ленин 50 çул ĕлĕкрех туса йĕркеленĕ парти паттăр кĕрешĕвĕн мухтавлă çулне утса тухрĕ. Ленин, унăн ĕçне малалла туса пыраканĕ тата вĕрентекенĕ аслă Сталин тата вĕсен соратникĕсем ертсе пынипе кĕрешӳсенче пиçĕхсе пынă пирĕн парти халĕ коммунизм тăвакан совет обществин ертсе пыракан, çул кăтартса малалла илсе пыракан вăйĕ пулса тăрать. Рабочи класпа ĕç хресченĕсен союзне организацилесе, Коммунистсен партийĕ пирĕн çĕршывра капитализмла строя тĕп турĕ, тĕнчери пĕрремĕш социализмла государствăна туса çирĕплетрĕ. Парти ертсе пынипе, пирĕн çĕршыври халăхсем, совет стройĕ çине таянса, чи малта пыракан индустри, социализмла шултра ялхуçалăхĕ туса хучĕç, çĕнĕ, социализмла общество туса çитерчĕç. Ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа кĕртсе пырса, Коммунистсен партийĕ Российăри халăхсене нумай ĕмĕрсем хушши пулнă социаллă тата нацилле пусмăртан хăтарчĕ, ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсем экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтерчĕ, хамăрăн Тăван çĕршыври мĕнпур нацисене ССР Союзĕнчи халăхсен пĕрлĕхлĕ тăванла çемйине пĕрлештерчĕ.

Коммунистсен партийĕ пирĕн çĕршыври ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхне те ĕмĕрхи пусмăрлăхран хăтарса çĕнĕ пурнăç, социализмла пурнăç çулĕ çине илсе тухрĕ. Парти ертсе пынипе, ытти тăванла халăхсем, уйрăмах аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе чăваш халăхĕ хуçалăхпа культура енĕпе калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ, малта пыракан социализмла наци пулса тăчĕ.

Коммунистсен партийĕн 19-мĕш съезчĕ парти никам аркатайми çирĕп те пĕрлĕхлĕ пулнине, партипе халăх çав тери тачă пĕрлешсе тăнине, Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче тăрса, парти хамăр çĕршыври халăхсене коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерессишĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешнине çĕнĕрен яр-уççăн кăтартса пачĕ. Пирĕн Коммунистсен партийĕн историйĕ ĕçпе кĕрешӳри марксизм-ленинизм пулса тăрать. Марксистла-ленинла теорин вăйĕпе пурнăçлăхне практикăра, пролетариатпа ĕçсынни массисен класс кĕрешĕвĕнче тĕрĕсленĕ. Марксизм-ленинизм теорине асра тытса, объективлă экономикăлла законсене тĕплĕн пĕлни çине таянса, Коммунистсен партийĕ тĕрĕс политика, обществăн материальнăй пурнăç аталанăвĕн ыйтăвĕсене тата халăх интересĕсене палăртса тăракан политика туса хатĕрлерĕ. Партин çак политики массăсен творчествăлла активлăхĕ çине таянса тăрать, ăна пĕтĕм общество ырласа йышăнать, çав политикăна пурнăçа кĕртессине пирĕн халăх хăйĕн тăван ĕçĕ тесе шутлать. Çакăнта пулать те ĕнтĕ çав политикăн хăвачĕ.

Парти çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыни унăн речĕсем пĕрлĕхлĕ пулнинчен килет. Партин вăйĕ унăн речĕсен пĕрлĕхĕнче, вăл халăхпа тачă çыхăнса тăнинче, халăх вăйĕ вара—вăл парти тавра пĕтĕçсе тăнинче.

Парти халăхăн хаяр тăшманĕсене, тĕнчери империализмăн ирсĕр агенчĕсене—троцкистсене, зиновьевецсене, бухаринецсене, буржуалла националистсене, буржуалла перерожденецсене тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкрĕ. Çав мĕнпур тăшмансем пирĕн партие аркатса яма, пирĕн çĕршыва капитализм патне каялла тавăрма, ĕçсыннисем хăйсен вăйне шанса тăрассине хавшатма, социализм туса çитерес шанчăка хавшатма хăтланнă, партин марксистла-ленинла политикине капитулянтла политикăпа, капитализмла чуралăха тепĕр хут тавăрма тата пирĕн çĕршыв тĕнчери империализма пăхăнса тăмалла тума тăрăшакан политикăпа улăштарма хăтланнă.

Коммунистсен партийĕ Совет государствин системинче пĕртен-пĕр парти, çав вăхăтрах тата влаçра тăракан парти, хăйĕн ертсе пырас рольне никампа та валеçмен парти пулса тăрать. Çакă вара, уйрăмах капитализмла йĕритавралăх условийĕсенче, партипе халăхăн вăрттăн тăшманĕсем тĕлĕшпе хамăрăн революцилле сыхăлăха вăйлатса пыма кирлине ялан асра тытма хушать. Ленин пĕрре кăна мар асăрхаттарнă тăрăх, влаçра тăракан партие тĕрлĕ карьеристсем шăвăнса кĕреççĕ, коммунист тумĕпе чеен витĕнсе, тăшмансем парти ретне шăвăнса кĕме, империализмла çĕршывсен тата вĕсен разведкисен агенчĕсем пулса парти ретĕнче вăрттăн аркатуллă ĕç туса пыма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та коммунистсемпе мĕнпур ĕçсыннисен революцилле сыхăлăхне малалла ӳстерсе пырасси парти организацийĕсен политикăлла-воспитанилле ĕçĕнчи пысăк задача пулать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн июль уйăхĕнче пулса иртнĕ Пленумĕ пирĕн аслă партин никам аркатайми пĕрлĕхне тата вăл халĕ тулашри тата шалти политика енĕпе Совет Союзĕ умĕнче тăракан историлле задачăсене пурнăçа кĕртме яланах хатĕр тăнине кăтартса пачĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ халĕ коммунизмла общество тăвас, нумай нацилле социализмла государствăна малалла тĕреклетес, хамăрăн Тăван çĕршыва унăн тăшманĕсен агрессилле ĕçĕсенчен активлăн сыхласа тăмалла тăвас, мĕнпур совет çыннисен материальнăй тата культурăллă пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырас пысăк задачăсене татса парас тĕлĕшпе ĕçлет. Партипе совет, профсоюз, комсомол организацийĕсене пурне те партин рабочи класпа Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисен творчествăлла активлăхне умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмешкĕн мобилизацилесе тата организацилесе пыма хушать.

Пирĕн парти организацийĕсем умĕнче парти руководствин Ленин туса хатĕрленĕ принципĕсене тата парти пурнăçĕн нормисене пĕр пăркаланмасăр, тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырас, çак тĕлĕшпе халиччен пулнă мĕнпур çитменлĕхсене татăклăн пĕтерсе пырас задача тăрать. Пирĕн парти организацийĕсем умĕнче ĕçсыннисене совет патриотизмĕ майлă, халăхсен никам аркатайми туслăхĕ майлă, пролетарилле интернационализм майлă, мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе тăванла çыхăнса тăрас шухăш майлă воспитани парассине вăйлатса пырас задача тăрать. Çавăнпа пĕрлех буржуалла национализмăн кирек мĕнле палăрăмне те хирĕç, буржуалла пăсăк идеологие хирĕç пĕр килĕшмесĕр кĕрешсе пымалла, çынсен ăс-тăнĕнче капитализм юлашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

Парти пропагандипе политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатса, коммунистсемпе пĕтĕм халăха коммунизмăн аслă ĕçĕ çĕнтерессине шанса тăма, хамăрăн партие тата социализмла Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеме воспитани парса пымалла. Пропаганда ĕçĕнчи тĕрĕс мар практикăна, уйрăм çынсен историри рольне тĕрĕс мар ăнлантарса панисене пĕтĕмĕшпех пĕтермелле. Парти организацийĕсенче коллективлăн ертсе пырас принципсене çирĕплетмелле, парти массисемпе совет халăхĕн творчествăлла активлăхне çĕклесе пымалла.

Пропаганда ĕçĕнче халĕ марксизм-ленинизм теорине начетникла, догматикла вĕренес йăлана хирĕç нихçанхинчен те ытларах кĕрешсе пымалла. Марксистла-ленинла теори догма мар, ĕçри руководство пулса тăнине асра тытса, пур коммунистсен те марксизм-ленинизмăн творчествăлла характерне ăнланса илме тăрăшмалла, уйрăм формулировкăсене мар, Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн пурне те çĕнтерекен, тĕнчене çĕнетсе урăхлатакан революциллĕ вĕрентĕвĕн чăн-чăн тупсăмне тĕплĕн вĕренсе пĕлмелле. Пирĕн парти иртнĕ 50 çул хушшинче утса тухнă аслă историлле çула вĕреннĕ чухне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене тата парти съезчĕсемпе конференцийĕсен, ЦК пленумĕсен решенийĕсене тĕплĕн вĕренсе пĕлмелле.

Пирĕн социализмла Тăван çĕршыв халĕ нихçанхинчен те хăватлă. Халăхпа тачă пĕрлешсе, пирĕн парти çĕнĕ çĕнтерӳсем патне шанчăклăн пырать. Вăл пирĕн çĕршыва коммунизм обществи тăвас çулпа çирĕппĕн ертсе пырать. Парти ертсе пыни—совет стройĕн никам аркатайми çирĕплĕхĕн тата унăн мĕнпур çитĕнĕвĕсен татăклă условийĕ пулса тăрать.

Ленинизм ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Партин Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа аллă çул тултарнă ятпа

* * *

Шупашкарти предприятисенче

Пирĕн республикăри ĕçсыннисем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле КПСС Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс — Энгельс — Ленин — Сталин институчĕн Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул (1903—1953) тултарнă май кăларнă тезиссемпе хытă интересленеççĕ.

Промышленность предприятийĕсемпе артельсенче, учрежденисемпе организацисенче тата колхозсенче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен пропагандистсемпе агитаторсем лекцисемпе докладсем тата калаçусем ирттереççĕ.

Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан обществăн членĕ, истори наукисен кандидачĕ П. Григорьев юлташ Атăл леш енчи торфопредприятири рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем патĕнче пулса, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен лекци вуласа панă. Лекци хыççăн торф кăлармалли плана срокчен тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртăвăн итогĕсене тунă тата производствăра малта пыракансене преми панă. Ăмăртура торф кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп участок пысăк çитĕнӳ тунă, вăл сезонти плана палăртнă срокран 16 кун малтан тултарнă.

Электроаппаратура заводĕнчи, пир-авăр комбиначĕнчи агитаторсем КПСС Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин институчĕн тезисĕсене рабочисене вуласа панă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă май хулари парти библиотекисенче, предприятисенчи хĕрлĕ кĕтессенче кĕнеке выставкисем тата витринисем организациленĕ.

КПСС хула комитечĕ докладчиксен канашлăвне ирттерчĕ, вĕсем çак кунсенче пуçламăш парторганизацисен уçă пухăвĕсенче пулса пирĕн парти 50 çул тултарни çинчен докладсем туса параççĕ.

* * *

Республикăри М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăра марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ.

Çак кунсенче партин II-мĕш съезчĕ пулнăранпа 50 çул тултарнине паллă туса библиотекăра выставка уçнă. Унта парти историйĕнчи çак паллă событи мĕнле тапхăрта пулса иртнине кăтартакан материалсем чылай, тĕрлĕ схемăсем пур. Кунтах илемлĕ витринăра В. И. Ленинăн «Утăм малалла, икĕ утăм каялла» тата «Мĕн тумалла?» кĕнекисене вырнаçтарнă. Çавăн пекех партин II-мĕш съезчĕ пирки В. И. Ленин çырнă кĕнеке, сулпуç сочиненийĕсен тĕрлĕ томĕсем пур. Выставкăра И. В. Сталинăн «Пролетарисен класĕ тата пролетарисен партийĕ» ятлă чаплă произведенине, Парти историйĕн кĕске курсне курма пулать. Съездăн ĕçĕсенчен пĕри вăл—парти программине йышăнасси пулнă. Çак программăна сӳтсе явнă чухне съездăн оппортунистла пайĕ пролетариат диктатури çинчен каланине хирĕç пулнă. Выставкăра партин II-мĕш съездĕнче хăш организацисенчен миçе делегат пулнине тата çак делегатсен составне кăтартакан схемăсем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Парти Уставĕн пĕррĕмĕш параграфĕ пирки В. И. Ленин тăратнă формулировкăна ятарласа хатĕрленĕ рамка çине çырса хунă. Унта çапла каланă: парти программине йышăнакан, партие материальнăй пулăшу парса пыракан тата унăн организацийĕсенчен пĕринче тăракан кашни çын парти членĕ пулма пултарать, тенĕ.

Выставкăра обществăлла-политикăлла ытти литература та пур. Кунта съезд çинчен калакан пуян материал тупма пулать.

Мухтавлă çур ĕмĕр

Куллен умăмри томсене эп уçатăп,
Курап аслă партийĕн чаплă çулне.
Пур халăхпа харăс хастарлăн утатăп
Çак анлă çулпа коммунизм патне.

Ĕçре пиçĕхсе, пĕр çемье пек хаваслăн
Юрлать сан çинчен ман çĕршыв юрăсем,
Умри тăшмана аркатса сăлатмашкăн
Ялан хатĕр санăн патвар çыннусем.

Хĕвел çинелле савăнса пăхнă евĕр,
Пăхать сан çине тарпа пиçнĕ тĕнче.
Эс—пурнăç хăвачĕ, ялавĕ, телейĕ,
Маяк эс ĕçхалăхĕн çулĕ çинче.

Ĕçпе, чăнлăхпа эс хисеплĕ чап илтĕн,
Çур ĕмĕр танлашрĕ пиншер çулсемпе.
Этемлĕх курман паттăрсем çитĕнтертĕн,
Тĕнче тĕлĕнет халь вĕсен ĕçĕпе!

Сана, хурçă пек шăратса, çитĕнтерчĕ
Мухтавлă çулпуçăмăр Ленин атте.
Эс чĕнтĕн, ĕç çарĕ пĕр харăс çĕкленчĕ,—
Кăтартрĕ никам çĕнейми хăватне.

Пире çĕнтерӳ тума, парти, вĕрентрĕн,
Эс хушнă пек ӳсрĕç çĕршер хуласем.
Колхозлă хире паллайми эс çĕнетрĕн.
Пиншерĕн çуралчĕç хастар талантсем.

Çĕршывăн чапне аслă Сталин ӳстерчĕ.
Ахаль тăкăнмарĕ вутра пирĕн юн.
Çурхи сад пекех ман çĕршыв чечекленчĕ,
Ĕçлес те пурнас та килет кунран-кун.

Чăваш ачи эпĕ. Эп тивĕçлĕ пултăм
Тăма хурçă партин мухтавлă ретне.
Эс—манăн телейĕм, хаваслă кун-çулăм
Ӳкермĕн нихçан коммунистăн ятне.

Александр НАУМОВ.

ПАРТИН ИСТОРИЛЛЕ СЪЕЗЧĔСЕМ

(РСДРП-ăн 2-мĕш съезчĕ пулнăранпа 50 çул çитнĕ тĕле)

Съезда хатĕрлени

50 çул ĕлĕкрех, 1903 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче, РСДРП-ăн иккĕмĕш съезчĕ уçăлнă, вăл Российăри рабочи класăн революцилле марксистла партине пуçласа янă.

Пирĕн парти никĕсне хывакан генилле В. И. Ленин рабочи класăн партине Маркспа Энгельс вĕрентĕвĕн теорийĕ çирĕп никĕсĕ çинче туса пынă. Творчествăлла марксизмăн чи аслă представителĕ пулса, Ленин çапла кăтартса панă: вырăс социалисчĕсен Маркс теорине хăйсем тĕллĕн тĕпчесе вĕренмелле, мĕншĕн тесен çав теори ертсе пыракан пĕтĕмĕшле положенисене çеç кăтартса парать, вăл положенисемпе кашни çĕршывра çав çĕршыв аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене кура усă курмалла.

Ун чухнехи II-мĕш Интернационалăн социалистла партийĕсем марксистла парти тĕслĕхĕ пулма пултараймаи. Çав партисем, буржуалла-демократилле ирĕклĕхсен условийĕсенче тунă тата капитализм чылаях мирлĕ аталаннă лару-тăрура ĕçлесе тăнă партисем, ытларах та ытларах пăсăлса пынă, парламентла мирлĕ майсемпе ĕçлеме тăрăшнă, хăйсем умне капитализма сирпĕтсе антарас задача пачах та лартман.

Российăра марксистла партие урăх лару-тăрура — империализм саманинчи условисенче тунă, ун чухне капитализм хирĕçĕвĕсем çав тери çивĕчленсе çитнĕ, пролетарилле революци пурнăçри чи кирлĕ ыйту пулса пынă. Ку лару-тăрура çĕнĕ сăнарлă парти, социаллă революцие пролетариат диктатурин партийĕ кирлĕ пулнă.

ХХ-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче рабочисен юхăмĕ вăйланнă май революцилле юхăн центрĕ Хĕвеланăçĕнчен Российăна куçнă, Росси ун чухне империализмăн мĕнпур хирĕçĕвĕсен тĕп пункчĕ пулса тăнă. Россия 1905—1907 çулсенчи революци — империализм саманинчи пĕрремĕш буржуалла-демократилле революци умĕнхи вăхăтра пурăннă. Çак революци пуçне тĕнчери чи революцилле пролетариат тăнă, хĕн-хур куракан нумай миллионлă хресченĕсем пролетариатăн вăйлă союзникĕ пулнă.

Российăра революцилле марксистла партие çав тери хаяр политикăлла террор условийĕсенче тунă. Патша йĕрки рабочи класăн чи лайăх çыннисене вĕçĕмсĕр хĕçĕрленĕ. Малта пыракан идейăсем кăштах палăрнине те путарса пынă. Марксистла парти тума тата ăна ĕçлеттерме йывăр пулнă: вăл задачăна татса парас тесен, массăсене ĕçе хутшăнтармасăр тăракан народниксен идеологине çĕмĕрсе тăкмалла пулнă, марксизма пăсма тата ăна буржуази интересĕсемпе килĕштерме хăтланнă «легальнăй марксистсене» тăрă шыв çине кăлармалла пулнă, Российăра пĕтĕм тĕнчери оппортунизм, бернштейнианство идейисене сарма хăтланнă «экономистсене» çĕмĕрсе тăкмалла пулнă. Ленин çапла кăтартса панă: «экономистсем», хăйсен Хĕвеланăç Европăри тăванĕсем пекех, революцилле кĕрешĕве йышăнман, социализма, пролетариат диктатурине йышăнман.

Хăйĕн идейăлла хĕçпăшалĕпе те, хăйĕн кĕрешÿри организацилĕхĕпе те рабочи класа малтан патша йĕркине сирпĕтсе антарассишĕн, унтан социализмла революци çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешĕве илсе кайма пултаракан революцилле марксистла парти тумалла пулнă.

Пролетариат, — тесе çырнă Ленин, — никам çĕнтерейми вăй пулса тăма пултарать тата пурпĕрех пулса тăрать. Унăн умĕнче вара вырăс самодержавийĕн хăрса çитнĕ влаçĕ те, тĕнчери капитализмăн хăрса пыракан влаçĕ те тытăнса тăраймĕ.

Ленин малтанах витĕр курса тăни тĕрĕс пулнине обществăн пĕтĕм аталанăвĕ кăтартса пачĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, 50 çул ĕлĕкрех генилле Ленин туса хунă парти, Ленин ертсе пынипе, Ленин ученикĕ тата унăн ĕçне малалла туса пынă аслă Сталинпа унăн соратникĕсем ертсе пынипе калама çук хăватлă вăй пулса тăчĕ, йышлă çапăçусенче кĕрешсе çирĕпленчĕ.

РСДРП-ăн 1898 çулта пулса иртнĕ 1-мĕш съезчĕ парти тума пултарайман, парти программипе Уставĕ пулман, çав съездра суйланă Центральнăй Комитета тытса хупнă. Российăри социал-демократилле организацисенче уйрăм кружоксем кăна ĕçленĕ, организациленсе ĕçлени пулман. Ленинăн революцилле марксистла парти тумалли чаплă планĕ çав лару-тăрури тухмалли шанчăклă çула кăтартса панă. Ленин çапла каланă: рабочи класăн политикăлла партине тăвас ĕçе пĕтĕм Российăри политикăлла кĕрешÿ хăвачĕ организациленинчен тытăнас пулать, вăл чи кирлĕ ĕç, çав чи кирлĕ ĕçе тусан, Российăра рабочи класăн революцилле партине тăвас ĕçпе çыхăнса тăракан пур задачăсене те татса пама пулать.

Çавăн пек хаçат ленинла «Искра» пулнă (1900—1903 ç.ç.). Вăл хаçат рабочисен юхăмĕнчи тăшмансене идея тĕлĕшĕнчен çĕмĕрсе тăкма май панă, вырăссен революцилле марксисчĕсене пĕр идея тавра пĕтĕçтернĕ, вырăнти сапаланчăк социал-демократилле организацисене пĕрлĕхлĕ партие пĕрлештерекен хăватлă вăй пулса тăнă. «Экономистсем» пĕрлешмесĕр тата уйрăм кружоксенче ĕçленине хирĕç кĕрешсе, ленинла «Искра» пролетариатăн революцилле марксистла партине тума кирлĕ пур условисене те хатĕрлесе панă. Çав хаçат страницисенче Ленин, оппортунистсене хирĕç нимĕн килĕшмесĕр кĕрешсе, революцилле марксистла парти тумалли хăйĕн планне хÿтĕленĕ, çав партин стратегийĕпе тактики ыйтăвĕсене çутатса панă, çывхарса килекен буржуалла-демократилле революцире пролетариатпа хресченсем хушшинче союз тума кирлине тата çав революцире пролетариат гегемон пулма тивĕçлине кăтартса панă, национализма хирĕç кĕрешсе, нацисен самоопределени прави çинчен марксистла положени кăларса тăратса, ăна хÿтĕлесе хăварнă.

Парти тăвассишĕн пынă кĕрешÿре В. И. Ленин çырнă «Мĕн тумалла?» ятлă произведени çав тери пысăк вырăнта тăнă. Ленин унта «экономизма» çĕмĕрсе тăкнă. Çак произведенире рабочисен стихийăлла юхăмĕ хыççăн кайни, пролетариат кĕрешĕвĕнче социализмла ăнланулăх рольне пĕчĕклетни вăл—оппортунизм пулса тăнине кăтартса панă. Рабочи класăн аслă ĕмĕчĕсемшĕн кĕрешес ĕçре Ленин революцилле теорие, марксистла партие питĕ пысăк вырăна хунă, марксистла партин идеологилле никĕсĕсене генилле хывса панă.

Российăри социал-демократире ленинла «Искра» çĕнтерсен кăна партин иккĕмĕш съездне пухма май килнĕ.

Ленин майлисем парти пĕр шухăшлă тата пĕрне-пĕри ĕçлекен çынсен, централизациленĕ, пĕрлĕхлĕ, çирĕп пĕрлешнĕ организацийĕ пулмалла тенĕ. Вĕсем парти çине çапла пăхнă: парти организациленнĕ отряд пулмалла, унăн членĕсем партие хăйсене хăйсем кĕмесе мар, парти членне вĕсене парти организацийĕсенчен пĕри илмелле, вĕсен партин хурçă пек çирĕп дисциплинине пăхăнмалла. Парти организацийĕн партире тăракан кашни член ĕçне чăннипех тĕрĕслесе тăмалла.

«Пирĕн задача, — тенĕ Ленин съездра, — хамăр партин çирĕплĕхне, тусемлĕхне, тасалăхне сыхласа хăварасси пулать. Пирĕн парти членĕн ячĕпе пĕлтерĕшне çÿлерех, çÿлерех тата çÿлерех çĕклеме тăрăшас пулать...» (Соч., 6 т., 459 стр.).

Çур ĕмĕр ĕлĕкрех Ленин кăтартса панă çак задача яланах пирĕн партин чи паха задачи пулнă, халĕ те чи паха задача пулса тăрать.

Съездра искровецсем икĕ ушкăна уйăрăлса кайнине пула Уставăн пĕрремĕш параграфне Мартовăн оппортунистла формулировкипе йышăннă.

Съезд хупăнас тĕле РСДРП икĕ фракцие уйăрăлнă. Чăн-чăн революцилле марксистсене, Ленин майлисене, партин центрти органĕсене суйланă чухне ытларах сасă илнисене, большевиксем тесе пуçланă, вĕсене хирĕç пыракансене, сахалтарах сасă илнисене, меньшевиксем тенĕ.

Съезд марксизм «экономизма» çĕнтернине çирĕплетнĕ. Программăпа Устав йышăнса, съезд социал-демократилле парти тунă, пĕрлĕхлĕ парти йĕркине туса хатĕрленĕ. Анчах организацилле ыйтусем пирки съезд тивĕçлĕ вырăнта тăрайман, мĕншĕн тесен вăл организацилле ыйтусем тĕлĕшпе меньшевиксен оппортунизмне вĕсене çитиех тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкман.

Съезд хыççăн партире унăн революцилле пайĕпе оппортунистла пайĕ хушшинче кĕрешÿ татах та çивĕчленсе кайнă. Оппортунистсем партие каялла туртнă, организацилле сапаланчăклăх, уйрăм кружоксем, кустарничество патне туртнă.

«Ленинăн вырăс пролетариачĕпе унăн партийĕ умĕнче тунă питех те пысăк тава тивĕçлĕ ĕçĕ вăл, — тенĕ И. В. Сталин, — меньшевиксен организацилле «планĕн» пĕтĕм хăрушлăхне çав «план» çуралса тухма пуçланă чухнех кăтартса панинче пулса тăрать.., ăна кăтартса парса, меньшевиксен организаци тĕлĕшĕнчи йĕркесĕрлĕхне хирĕç хаяр çапăçу пуçласа янă, практиксен мĕнпур тимлĕхне çав ыйту тавра пĕтĕçтернĕ. Мĕншĕн тесен сăмах партин пуласси пулас çукки çинчен, парти пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен пынă» (Соч., 4 т., 308 стр.).

Партин Иккĕмĕш съезчĕн итогĕсене тата партин революцилле пайĕпе оппортунистла пайĕ хушшинчи кĕрешĕве Ленин «Утăм малалла, икĕ утăм каялла» ятлă кĕнекере тарăн çутатса панă. Çак произведенире марксистла партин организацилле никĕсĕсене хатĕрлесе панă.

Ленин çапла вĕрентет: Коммунистсен партийĕ рабочи класăн малта пыракан, марксистла отрячĕ, организациленнĕ отряд пулса тăрать, рабочи класăн мĕнпур организацийĕсен чи çÿлĕ форми пулса тăрать. Парти вăл рабочи класăн малта пыракан отрячĕ рабочи класăн миллионшар массисемпе çыхăну тытнине пĕлтерет. Партие централизм никĕсĕ çинче организацилемелле, унăн пĕрлĕхлĕ устав, партири пĕрлĕхлĕ дисциплина, ертсе пыракан пĕрлĕхлĕ центр пулмалла. Хăй речĕсен пĕрлĕхне сыхласа хăварас тесе, парти пролетарилле пĕрлĕхлĕ дисциплина тытса пырать, вăл дисциплинăна парти членĕсен пурин те, ертсе пыракансен те, рядовой членĕсен те обязательнă пăхăнса тăмалла.

Ленин марксизм историйĕнче малтанхи хут парти çинчен, вăл пролетариатăн ертсе пыракан организацийĕ, пролетариатăн тĕп хĕçпăшалĕ пулни çинчен, çав хĕçпăшалсăр пролетариат социализмла революцире çĕнтерме пултарайманни çинчен вĕрентÿ туса хатĕрленĕ.

Ленин туса хатĕрленĕ партин пурнăçĕн нормисем, партин ертсе пымалли принципĕсем партин шалти ĕçĕсен никĕсĕ пулса тăчĕç. Вĕсен пурнăçри калама çук хăватлă вăйне пирĕн партин пĕтĕм мухтавлă историйĕ тăршшĕнче тĕрĕсленĕ.

Вырăссен малтанхи буржуалла-демократилле революцийĕ аталаннă тапхăрта Ленин партине рабочи класăн тактикине генилле туса хатĕрленĕ, марксизма пролетарилле революцин çĕнĕ тактикипе пуянлатнă, çав теорисĕр 1917 çулта капитализма хирĕç кĕрешсе çĕнтерÿ тума май пулман. Столыпинла реакцин йывăр, хура çулĕсенче Ленин партин теорилле никĕсĕсене, коммунизмăн теорилле никĕсĕ пулса тăракан диалектикăлла тата историлле материализма хÿтĕлесе хăварса, малалла аталантарнă.

Партин Ленин туса хатĕрленĕ идеологилле, организацилле, политикăлла (тактикăлла) тата теорилле никĕсĕсем çине таянса, пирĕн парти пролетариат кĕрешĕвне ертсе пыма хатĕрленесе çитнĕ.

РСДРП-ăн Иккĕмĕш съездĕнчен пуçласа, В. И. Ленин кăтартса панă тăрăх, большевизм политикăлла парти пулса тăрать. Анчах 1912 çулхи Прагăри конференци пуличчен большевиксемпе меньшевиксем формальнă пĕр партире тăнă.

Большевиксен программăлла, организацилле, тактикăлла тата теорилле принципĕсем тĕлĕшĕнчен меньшевиксемпе пĕр пекки нимĕн те пулман, большевиксем партие меньшевиксенчен тасататассишĕн, пирĕн партие организаци тĕлĕшĕнчен тăтăкланах йĕркелесе çитерессишĕн кĕрешнĕ. Меньшевик-ликвидаторсене РСДРП ретĕнчен хуса кăларас тата большевиксене хăйне уйрăм партие пĕрлештерес задачăна 1912 çулта пулса иртнĕ Прагăри конференци татса панă, çав конференцие хатĕрлес тĕлĕшпе Ленинпа Сталин калама çук пысăк ĕç тунă.

Прагăри конференци йышăннă решенисем пĕтĕм тĕнчери оппортунизма çав тери вăйлă пырса çапнă. Прагăри конференци Российăри тата пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмĕнче марксизм-ленинизмăн политикипе идеологийĕ оппортунизм политикипе идеологине çĕнтерес ĕçре пысăк вырăн йышăннă.

И. В. Сталин «Искра» хаçат вулать.
Н. ЖУКОВ художник ÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Съезд решенийĕсен историлле пĕлтерĕшĕ

Иккĕмĕш съезд ют çĕршывра пухăннă. Малтан унăн ларăвĕсем Брюссельте пулса иртнĕ, Бельги полицийĕ Бельгирен тухса кайма хушсан, съезд Лондона куçнă. Съездра 26 организацирен пурĕ 43 делегат пулнă. Унта «Искра» майлисем кăна мар, ăна хирĕççисем те пынă: «Искра» майлисем ытларах пулнă, анчах хăйсене «Искра» майлисем тесе шутлакансем те революцилле марксизм никĕсĕ çинче çирĕп тăраймаи. Çавăнпа та съездра революцилле марксизмпа оппортунизм хушшинче хаяр кĕрешÿ пуçланса кайнă.

Иккĕмĕш съезд умĕнче чăн-чăн марксистла парти тăвас задача тăнă.

В. И. Ленин съездра çав тери хăватлă революцилле вăйпа, революцилле марксизм идейисен чăнлăхне витĕр курса тăрса, вырăс рабочи класĕн вăйне çирĕп шанса, хăйĕн революцилле марксистла парти тумалли планне хÿтĕленĕ. Оппортунистсене хирĕç кĕрешсе, Ленин ун чухнехи рабочисен пĕтĕм интернационаллă юхăмĕ тĕлĕшпе революцилле марксизм принципĕсене тĕрĕс кăтартса панă.

Съездра тăракан чи пысăк ыйту—парти программине йышăнасси пулнă. «Искра» сĕннĕ программа проектне сÿтсе явнă чухне пролетариат диктатури çинчен хирĕçÿсем тухса кайнă. Оппортунистсем марксизм пролетариат диктатури кирли çинчен вĕрентнине хирĕç пынă, мĕншĕн тесен, вĕсен хăйсем умне капитализма сирпĕтсе антарас задача лартман. Вĕсем çапла каланă: II-мĕш Интернационалăн социал-демократилле партийĕсенчен пĕри те хăйсен программине пролетариат диктатури çинчен калакан пункт кĕртмен, тенĕ. Оппортунистсемпе кĕрешсе, Ленинпа ун майлисем программăра пролетариат диктатури çинчен калакан требование хÿтĕлесе хăварнă.

Программăри чи пысăк ыйтусенчен пĕри пролетариатăн революцири союзникĕ çинчен тăракан ыйту пулнă. Революци кун-çулĕ хресченĕсем мĕн хыççăн—буржуази е пролетариат хыççăн кайнинчен килнĕ. Оппортунистсем программăна хресченсен ыйтăвĕ пирки тăракан требовани кĕртессине хирĕç пынă, мĕншĕн тесен вĕсене революци кирлĕ пулман, пролетариат союзникĕ пулса тăракан хресченсем çине вĕсем йĕрĕнсе пăхнă. Оппортунистсене хирĕç пырса, Ленин çапла кăтартса панă: пролетариат хресченсене революци енне çĕнтерсе илет тата хăйĕн партийĕ ертсе пынипе пролетариат либералла буржуазие çул çинчен пăрса, революцире гегемон пулса тăрать.

Съездра наци ыйтăвĕ тăрăх принциплă кĕрешÿ пуçланса кайнă. Бундовецсем нацисен самоопределени прави çинчен калакан марксистла требование хирĕç культурăлла-нацилле автономи çинчен калакан оппортунистла, буржуалла-националистла требовани тăратнă, ку вăл пролетарилле интернационализма йышăнмасăр, нацилле пусмăр енне тăнипе пĕрех пулнă. Ленин ертсе пынипе вырăс марксисчĕсем буржуалла-националистла туртăмсене таткăланах çапса аркатнă.

Съезд ленинла «Искра» хатĕрленĕ программăна йышăннă. *Вăл чăн-чăн наукăлла тата революцилле программа пулнă,* çав программăпа большевиксем рабочи класпа ĕç хресченĕсен патша йĕркипе капитализма хирĕç пыракан çĕнтерÿллĕ кĕрешĕвне ертсе пынă.

Иккĕмĕш съезд парти Уставне йышăннă. Ку ыйту тăрăх В. И. Ленин доклад тунă. Устав проекчĕ марксистла партин организацилле принципĕсене уçăн кăтартса панă. Уставăн пĕрремĕш параграфĕ пирки—кам партире членра тăма *пултарни çинчен калакан параграф пирки* — съездăн марксистла, революцилле пайĕпе оппортунистла пайĕ хушшинче çивĕч тавлашусем пуçланса кайнă. Ленин формулировки çапла каланă: парти программине йышăнакан, партие материальнăй пулăшу парса пыракан тата унăн организацийĕсенчен пĕринче ĕçлекен кашни çын парти членĕ пулма пултарать. Съездăн оппортунистла пайĕ парти организацийĕсенчен пĕринче ĕçлессине парти членĕ пулмалли условисенчен пĕри вырăнне шутламан, çапла вара партие карьеристсене, идейăсăр çынсене, пролетариата ют элементсене кĕрсе кайма пысăк май панă.

Ĕçсыннисен интересĕсемшĕн çур ĕмĕр хушши кĕрешни

Пирĕн партие туса хунăранпа çур ĕмĕр иртрĕ, çак тапхăрта вăл рабочи класс ĕçĕшĕн кĕрешсе пĕтĕм тĕнче историйĕнче пысăк вырăнта тăракан аслă çĕнтерÿсем турĕ. Çак вăхăт хушшинче пирĕн парти малтанхи марксистла кружоксемпе ушкăнсенчен пуçласа коммунистсен аслă партийĕ патне çити вăрăм та мухтавлă çула утса тухрĕ, халĕ вăл рабочисемпе хресченсен хăватлă социализмла государствине ертсе пыракан пулса тăрать, совет халăхне социализмран майĕпен коммунизма куçас çулпа илсе пырать.

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем вуншар çулсем хушшинче Российăра пулнă пур тĕп партисене те: кадетсене, меньшевиксене, эсерсене, коммунистсене ĕçре тĕрĕслесе курнă. Пирĕн çĕршыври халăхсем, *революцилле событисем вăрăлса пынă* май буржуалла партисене пурне те сирсе пăрахса, коммунистсен партине суйласа илчĕç, çак парти хăйсен пурнăç интересĕсемшĕн кĕрешекен пĕртен-пĕр парти пулнине курчĕç. Коммунистсен партийĕ халăхăн йышлă массисене çывăх та тăван парти пулса тăрать. Çур ĕмĕр хушши пархатарлă ĕçленĕшĕн Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине халăх юратать тата шанса тăрать.

Пирĕн партин аллă çулхи истори опычĕ çапла кăтартса парать: партипе вăл ертсе пынин никам çĕнтерейми тĕп вăйĕ массăсемпе çыхăну тытнинче пулать. Парти халăх массисен тĕп интересĕсене палăртса тăрать пулсан, хăй ĕçне массăсем çине таянса туса пырать пулсан, ăна çĕнтерме май çук.

Çур ĕмĕрхи истори çапла вĕрентет: Коммунистсен партийĕ пĕр шухăшлă çынсен-*коммунистсен боевой союзĕ пулса тăрать*. Революцилле теори пулман пулсан, наукăлла социализма рабочисен юхăмĕпе пĕрлештермен пулсан, пролетариат тĕттĕмре çĕтсе çÿренĕ пулĕччĕ. Пирĕн парти вăйĕ çакăнта: вăл обществăлла аталану политикăлла кĕрешÿ законĕсемпе, çутçанталăкпа общество аталанăвĕн законĕсем çинчен вĕрентекен наукăпа, пусмăрпа эксплуатацире пурăнакан массăсен революцийĕ çинчен вĕрентекен наукăпа, мĕн пур çĕршывсенче социализм çĕнтересси çинчен тата коммунизм обществи тăвасси çинчен вĕрентекен наукăпа хĕçпăшалланнă. Марксистла-ленинла теори обществăн материальнăй пурнăç аталанăвĕн ыйтăвĕсене, ĕçсыннисен массисен интересĕсене палăртса тăрать.

Марксистла-ленинла теори — ĕмĕр чĕрĕ, *яланах аталанса пырать,* творчествăлла наука, догматизм унăн ют. Вăл çĕнĕ опытпа, çĕнĕ пĕлÿсемпе, историри çĕнĕ лару-тăрупа килĕшÿллĕн çĕнĕ шухăшсемпе тата выводсемпе вĕçĕмсĕр пуянланса пырать.

Хăй речĕсенче буржуалла идеологипе, оппортунизмпа нимĕн килĕшмесĕр кĕрешсе, пирĕн парти хăйĕн идеологийĕн тасалăхне, хăй речĕсен пĕрлĕхĕпе çирĕп пĕтĕçÿлĕхне упраса хăварчĕ. Коммунистсен партийĕн историйĕ вăл партие салатса яма, ун вăйĕпе хăвачĕн никĕсне аркатма тăрăшнă троцкистсене, бухаринецсене, национал-уклонистсене тата ытти тăшмансене хирĕç кĕрешсе, вĕсене çĕмĕрсе тăкнин историйĕ пулса тăрать. Истори çапла вĕрентет: мĕнпур буржуалла партисемпе вăк буржуалла партисене хирĕç тата хăй ретĕнчи оппортунистсене хирĕç нимĕн килĕшмесĕр, нимĕн шеллемесĕр кĕрешмен пулсан, парти обществăна урăхлатса çĕнетекен вăй, социализмла революцин организаторĕпе руководителĕ, çĕнĕ пурнăç тăвакан вăй пулма пултараймаи пулĕччĕ.

Рабочи класс ĕçĕшĕн пыракан хăйĕн паттăрла кĕрешĕвĕнче пирĕн парти çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ тăвать, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн речĕсен пĕрлĕхне яланах çав тери çирĕп сыхлать. Çав пĕрлĕх революцилле политика никĕсĕ çинче, ленинизм идейисемшĕн пыракан принциплă кĕрешÿ никĕсĕ çинче пулса пырать. Партин хурçă пек çирĕп пĕрлĕхĕ—ăна никам çĕнтерейми вăй парса тăракан çăлкуçĕ.

Пирĕн парти хăйĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене яланах хăюллăн та татăклăн палăртать, критикăпа самокритикăна аталантарса, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн малалла кĕрешме çĕнĕ вăй илет—çакăнта унăн калама çук хăватлă вăйĕ. Социализм çĕнтернĕ тата майĕпен коммунизма куçнă условисенче критикăпа самокритика çав тери пысăк вырăнта тăрассĕ. Критикăпа самокритика пирĕн аталанăвăн чăн-чăнах малалла илсе пыракан вăйĕ, вăл хамăр çитменлĕхсене çĕнтерме, хамăр кадрсене воспитани пама кирлĕ хăватлă инструмент пулса тăрать.

Пирĕн партин çур ĕмĕр хушшинчи историйĕнчен çакăн пек паха вывод тухса тăрать: парти политики — тĕрĕс те йăнăшсăр политика. Коммунистсен партийĕн политики ĕçсыннисен тĕп интересĕсенчен тухса тăрать, вăл общество аталанăвĕн объективлă законĕ çинче тытăнса тăрать.

Хăйĕн аслă революцилле политикине пула, çав политикăна пурнăçа кĕртессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешсе, парти рабочи класс ĕçĕшĕн пынă кĕрешÿре пĕтĕм тĕнчипе паллă историлле çитĕнÿсем турĕ. Пирĕн парти пирĕн çĕршыври рабочи класăн патша йĕркипе капитализмран ирĕке тухассишĕн пынă паттăр кĕрешĕвне ертсе пычĕ, хăйĕн хавхалантаракан тата организацилекен ĕçĕпе Октябрьти Аслă революцире çĕнтерÿ тума май пачĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе хавхаланса, совет халăхĕ çĕнĕ, социализмла индустри турĕ, колхозсем, совхозсем тата МТС-сем турĕ, вĕсене чи лайăх машинăсемпе хĕçпăшаллантарчĕ, хамăр çĕршывра культурăлла революци туса ирттерчĕ. Социализм çĕнтернипе пула пирĕн патăрта çынна çын эксплуатацилени пĕтерчĕ. Ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа кĕртсе пырса, Коммунистсен партийĕ Российăри халăхсене нумай ĕмĕрсенчи социаллă тата нацилле *пусмăртан хăтарчĕ*, ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсем экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтерчĕ, пирĕн Тăван çĕршыври пур нацисене те ССР Союзĕнчи халăхсен пĕрлĕхлĕ тăван çемйине пĕрлештерчĕ. Парти совет халăхĕн Аслă Отечественнăй вăрçăри мухтавлă историлле çĕнтерĕвĕсене хавхалантаракане тата организаторĕ пулчĕ, халĕ коммунизм строительствине ăнăçлă ертсе пырать.

Коммунизмшăн пыракан кĕрешÿре партин XIX-мĕш съезчĕ аслă маяк пулса тăрать, вăл партин ку чухнехи тапхăрти тĕп задачисене кăтартса пачĕ, вăл задачăсем çаксем пулаççĕ: социализмран майĕн коммунизма куçса пырса, коммунизма обществине тумалла, обществăн пурлăхпа культура шайне пĕрмаях хăпартса пымалла, общество членĕсене интернационализм шухăшĕ майлă тата мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе тăванла çыхăнусем тытса пурăнас шухăш майлă вĕрентсе воспитани памалла, тăшмансен агрессилле ĕçĕсенчен сыхланма Советлă Тăван çĕршывăн активлă оборонине пур майсемпе те тĕреклетсе пымалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ июльти Пленумĕ пирĕн аслă партин никам аркатайми пĕрлĕхне, вăл халĕ Совет Союзĕ умĕнче шалти тата тулашри политика тĕлĕшпе тăракан историлле задачăсене пурнăçа кĕртме хатĕр тăнине çĕнĕ вăйпа кăтартса пачĕ.

Парти политикине, ĕçсыннисен интересĕсемшĕн вуншар çул хушши кĕрешсе тĕрĕсленĕ политикăна, пирĕн çĕршыври халăх массисем вĕçĕмсĕр шанса тата активлă пулăшса тăрассĕ. Шалти политика тĕлĕшпе Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин тĕп ĕçĕ—совет çыннисен пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи тулли тивĕçтерсе пырасси пулать. Парти совет халăхĕн творчествăлла вăйне пирĕн социализмла Тăван çĕршыва малалла чечеклентерсе ÿстерессишĕн, социализмла промышленноçпа ял хуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешме мобилизацилет.

Коммунистсен партийĕн политики рабочисемпе колхозниксен союзне, пирĕн çĕршыври халăхсен пĕрлĕхĕпе туслăхне малалла çирĕплетсе пырать. Буржуалла национализм кирек мĕнле палăрнине те хирĕç татăклăн тата нимĕн килĕшмесĕр кĕрешсе пырса, парти массăсене пролетарилле интернационализм шухăшĕпе воспитани парать.

Парти массăсене коммунизмла воспитани парас ĕçе çине тăрса анлăн сарса, ку ĕçре пулнă пысăк çитменлĕхсене пĕтерсе пырать. Коммунистсен партийĕ массăсем хушшинче обществăлла тивĕçе ăнланса илессине, ĕç çине тата обществăлла харпăрлăх çине коммунизмла пăхассине çине тăрса аталантарса пырать, вăл халăха совет патриотизмĕпе халăхсен туслăхĕ майлă воспитани парать.

Пирĕн çĕршывра партипе государствăн ертсе пырас ĕçри аслă принципĕ коллективлăн ертсе пыни, пĕрлĕхпе çирĕп пĕтĕçÿлĕх пулса тăрать. Марксизм-ленинизм çапла вĕрентет: коллективлăн ертсе пырас принципа çирĕп тытса пыни—çĕршыва тĕрĕс ертсе пымалли шанчăклă май, Совет çĕршывне коммунизм патне пыма чи кирлĕ услови пулса тăрать.

Парти пропаганда ĕçĕнче, марксистла-ленинла теорие вĕреннĕ çĕрте начетничествăпа догматизма пĕтерме хушать. Марксистла-ленинла теори догма мар, ĕçри руководство пулнине шута илсе, парти пур коммунистсене те марксизм-ленинизмăн творчествăлла характерне ăнланса илме хушать, уйрăм формулировкăсене мар, Маркс — Энгельс—Ленин — Сталинăн пурне те çĕнтерекен, тĕнчене урăхлатса çĕнетекен вĕрентĕвĕн тĕп содержанине çирĕп пĕлме хушать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн пĕтĕм историйĕ пире шăпах çавăн çинчен вĕрентет.

КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ йышăннă решенисенчен пирĕн парти умне партин ертсе пырас ĕçĕнчи Ленин хатĕрлесе панă принципсене тата парти пурнăçĕн нормисене яланах çирĕп, тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырас, ку тĕлĕшпе халиччен пулнă йăнăшсене татăклăнах пĕтерес задача тухса тăрать.

Парти çĕршыври мĕнпур государствăлла тата обществăлла организацисен ĕçне куллен ертсе пырать. Çав çирĕп йĕркене пăсни совет обществинче парти влиянине вăйсăрлатать, государствăна сиен кÿрет. Партин ертсе пырас ĕçне вăйлатни Совет государствин вăй-хăватне тĕреклетме май парать. Ленинпа Сталин государство çинчен вĕрентнине пурнăçа кĕртсе пырса, парти Совет государствине ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетет, малти тата тулашри тăшмансемпе кĕрешме совет çыннисен сыхăлăхне ÿстерет.

Тулашри политика тĕлĕшпе коммунистсен партийĕн тĕп ĕçĕ—çĕнĕ вăрçă хатĕрлесе чĕртсе янине хирĕç яланах татăклăн кĕрешесси, мире сыхласа хăварса çирĕплетесси пулать. Халăхсен аслă çĕнтерĕвне—мир, демократи тата социализм лагерьне сыхласа хăварассине, совет халăхĕпе ытти çĕршывсенчи халăхсен туслă *çыхăнăвĕсене, аслă Китай халăхĕпе,* халăх демократийĕн мĕнпур çĕршывĕсенчи ĕçсыннисемпе ĕмĕр аркамми туслăха ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетессине парти хăйĕн тивĕçĕ тесе шутлать.

* * *

Иртнĕ аллă çул хушшинче пирĕн парти революцин пур тапхăрĕсенче те пысăк опыт пухрĕ. Çак опыт, марксизм-ленинизмăн аслă идейисем ют çĕршывсенчи ĕçсыннисен массисене *социализмпа демократишĕн, халăхсен ирĕклĕхĕпе пĕртанлăхĕшĕн, çирĕп миршĕн* тата халăхсем тăванла килĕштерсе ĕçлессишĕн кĕрешме шанчăклă çул кăтартса парассĕ.

Хăйĕн тăван Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, унăн кĕрешÿре тĕрĕсленнĕ *боевой ялавĕ айĕнче тачă пĕрлешсе*, совет халăхĕ хăйĕн историлле аслă ĕçне тăвать. Парти, правительство тата халăх тачă пĕрлешнипе пирĕн çĕршыв хăйĕн çулĕпе—çĕнтерÿллĕ коммунизм строительствин мухтавлă çулĕпе шанчăклăн та çирĕппĕн малалла пырать.

А. АЗИЗЯН.
Н. КИРЕЕВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Парторганизаци малтанхи итогсене сӳтсе яврӗ

Шӑхасан районӗнчи «Заря» колхозӑн кӑҫал 257 гектар ҫинчен кӗрхи тырӑсем, 308 гектар ҫинчен ҫуртырӑсем пуҫтарса кӗртмелле. Тырра вӑхӑтра акса хӑварса, лайӑх пӑхса ҫитӗнтернипе пула пур йышши культурӑсем те вӑйлӑ ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем умӗнче ӑнса пулнӑ тырпула кӗске вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртес задача тӑрать.

Тырпула уй-хиртен пуҫтарса кӗртесси—вӑхӑтра тумалли ӗҫ. Ку ӗҫре кашни сехетпе, кашни минутпа туллин усӑ курмалла. «Заря» колхозри пуҫламӑш парторганизаципе (секретарӗ Ф. Егоров юлташ) колхоз правленийӗ (председателӗ В. Никитин юлташ) ҫакна тӗплӗн шута илнӗ. Вӗсем куллен ертсе пынипе, колхоз уй-хирти тырпула пухса кӗртме чылай ӑнӑҫлӑ хатӗрленсе кӗтсе илчӗ. Ялхуҫалӑх машинисемпе транспорт инвентарӗсене тата лаша кӳлмелли хатӗрсене пурне те юсанӑ, итемсене тасатса йӗркене кӗртнӗ, амбарсемпе складсене дезинфекциленӗ. Государствӑна тырӑпа ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем леҫме транспорт бригади организациленӗ. Тырӑ виҫмелли, турттармалли хатӗрсемпе михӗсене тата ытти япаласене ҫителӗклӗ таран хатӗрленӗ.

Ҫаксемпе пӗрлех колхозра 70 гектар ҫинчи выльӑх апачӗ тума акнӑ кукӑрсене ҫулса пуҫтарса капана хывнӑ, ҫулҫӑллӑ апатсемпе витаминлӑ апатсем чылай хатӗрленӗ. Планпа 200 тонна силос хывмалла пулсан, ӑна пӗтӗмӗшпех хывса ҫитернӗ. Государствӑна утӑ памалли обязательствӑна ыраш вырма тухиччен чылай малтан пурнӑҫланӑ.

Июлӗн 21—22-мӗшӗсенче колхозра массӑллӑн тырӑ вырма тухрӗҫ. Халӗ ӗнтӗ колхозри мӗнпур ӗҫ вӑйне тата мӗнпур майсене тырпула хӑвӑрт тата тӑккаламасӑр пухса кӗртме мобилизацилемелле. Ҫак пысӑк та ответлӑ ӗҫсем хӑйсем тӗллӗн пуласса шанса ларни пите пысӑк йӑнӑш туни пулӗччӗ. Колхозри пуҫламӑш парторганизаци малтанхи 2—3 кун хушшинче уй-хирти ӗҫсем мӗнле пулса пынине тӗрӗслерӗ. Ҫак тӗрӗслеве колхозри коммунистсемпе пӗрле правлени членӗсем те хутшӑнчӗҫ.

Тӗрӗслӳ хыҫҫӑн ҫийӗнчех пуҫламӑш парторганизацин уҫӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ, унта тырпулсем пуҫтарса кӗртес ӗҫри малтанхи кунсен итогӗсене пӑхса тухрӗҫ. Пуху нумай ҫитменлӗхсене палӑртрӗ. Малтан туса ҫирӗплетнӗ ӗҫ планӗ тӑрӑх колхозра тырӑ вырнӑ ҫӗрте пӗтӗмпе 228 колхозникпа колхозница ӗҫлемелле. Анчах та малтанхи 3—4 кун хушшинче 35—40 ҫын нимӗнле сӑлтавсӑрах тырӑ вырнӑ ҫӗре те, ытти ӗҫсене те пачах хутшӑнман. Кун пек тӗслӗхсем уйрӑмах 1-мӗшпе 4-мӗш бригадӑсенче ытларах пулнӑ. Ҫавӑнпа пӗрлех колхозра тырӑ вырма пултаракан ҫамрӑксем 60 ҫын ытла. Малтанхи кунсенче вӗсенчен тырӑ вырма тухакансем пите сахал пулнӑ. А. Дмитриев юлташ ертсе пыракан 3-мӗш бригадӑра, сӑмахран, малтанхи кунсенче 16 ҫамрӑкран 4 ҫын кӑна тырпул пуҫтарса кӗртес ӗҫе хутшӑннӑ. Колхозри 2 жнейкӑна, вӗсем юсавлӑ пулин те, ӗҫлеттермесӗр лартнӑ.

Тырӑ вырас ӗҫри тепӗр ҫитменлӗх вӑл—ӗҫ пахалӑхӗшӗн кӗрешменни пулнӑ. Хӗшпӗр бригадӑсенче пучахсем нумай тӑкаласа хӑварнӑ. Вырнӑ участоксене ҫийӗнчех тӗрӗслесе йышӑнассине, колхозниксен ӗҫне кашни куллен шута илсе пырассине кирлӗ пек йӗркелемен пулнӑ.

Пуху кунта пӗрлех ытти ҫитменлӗхсене те нумай палӑртрӗ. Агитколлектив тырӑ вырнӑ малтанхи кунсенче колхозниксем хушшинчи агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе сарса пырас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Агитаторсем уйра ӗҫлекен колхозниксем патӗнче сахал пулнӑ, хаҫат-журнал вуласа парассине тата кӗске калаҫусем ирттерессине тивӗҫлипе организацилемен. Парторганизаципе колхоз правленийӗ кӑларса тӑракан «Шуҫӑм» стена хаҫачӗ паянхи ыйтусене кирлӗ пек ҫутатса пырайман, бригадӑсенче боевой листоксем йӗркеллӗ кӑларман.

Парторганизацин уҫӑ пухӑвӗ ҫакӑн пек ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерес тата тырпула уй-хиртен пухса кӗртес ӗҫе вӑйлатса пырас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решени йышӑнчӗ. Коммунистсем ҫав решение кашни колхозникпа колхозница патне ҫитерме сӗнчӗҫ. Пуху йышӑннӑ решенисем ҫинчен ӑнлантарса пама 1-мӗш бригадӑна Ф. Егоров, 2-мӗш бригадӑна В. Никитин, 3-мӗш бригадӑна Н. Евграфов, 4-мӗш бригадӑна П. Константинов коммунистсене ҫирӗплетнӗ. Вӗсем тепӗр кунхех уйра ӗҫлекен колхозниксем ӗҫленӗ вырӑна тухса кӗске канашлусем ирттерчӗҫ.

Парторганизаци ҫийӗнчех татӑклӑ мерӑсем йышӑнни усӑллӑ пулчӗ. Колхозра тырӑ вырас ӗҫӗн хӑвӑртлӑхӗ кунтан-кун ӳссе пыма тытӑнчӗ. Ӗҫе тухман ҫынсен шучӗ куллен-кун чакрӗ. Малтанхи кунсенче бригадӑра ӗҫ нормине ирттерсе тултаракансен шучӗ икшерӗн-виҫшерӗн ҫеҫ шутланнӑ пулсан, халӗ вӗсем вуншарӑн ытла шутланаҫҫӗ. 2-мӗш бригадӑра малтанхи вӑхӑтра Анастасия Харитонова, Ирина Алексеева колхозницӑсем кашни куллен 0,21—0,24-шер гектар ӑлӑпа тырӑ вырса ӗҫ нормине чылай ирттерсе тултарнӑ, халӗ ку бригадӑра вӗсем пек выракансем 20 ҫынтан та иртсе кайрӗ.

Ӗҫ нормине ирттерсе тултаракан колхозниксен шучӗ ытти бригадӑсенче те йышлансах пырать. Вӗсен ӗҫӗсене тӑтӑшах Кӑтарту хӑмипе Хисеп хӑми ҫинче палӑртаҫҫӗ тата «Шуҫӑм» стена хаҫачӗпе боевой листоксенче ҫутатса пыраҫҫӗ. Агитаторсем вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ытти колхозниксене каласа параҫҫӗ. Ҫапла вара малтанхи 3—4 кун хушшинче колхозра пӗтӗмпе те 30—40 гектар кӑна тырӑ вырнӑ пулсан, халӗ кашни куллен ҫавӑн чухлӗ е ытларах выраҫҫӗ.

Колхоз аван ҫапма тата государствӑна тырӑ леҫме тытӑнчӗ. Паянхи куна государствӑна 100 центнер ытла тырӑ кайса панӑ.

Колхозниксем августӑн 1-мӗшӗччен ыраш вырса пӗтерме, 10—12 кун хушшинче ҫуртрисене вырса пӗтерме, государствӑна тырӑ памалли плана сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫлама сӑмах параҫҫӗ. Ҫакна тума колхозра пур майсем те пур, ӗҫ вӑйӗ те ҫителӗклӗ.

Пуҫламӑш парторганизаци мӗнпур ӗҫе тӗрӗс йӗркелесе, организацилесе ертсе пырать, ялхуҫалӑх ӗҫченӗсен патриотла туйӑмне куллен-кун ытларах ҫӗклесе, хавхалантарса пырать.

С. СТЕПАНОВ.

Государствӑна тырӑ памалли графика кашни колхозӑн вӑхӑтра тултарса пымалла



УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Иван Васильков комбайнер Ҫӗрпӳри селекци станцийӗн уйӗнче самоходнӑй комбайнпа тырӑ вырать.
А. КОСТИН фотоӳкерчӗкӗ.

Государствӑна—тырӑ

ПЕРВОМАЙСКИ, июлӗн 29-мӗшӗ. (Телефонпа). «Путь социализма» колхоз районта пуринчен малтан ыраш вырма, ҫийӗнчех кӗлте турттарса аван ҫапма пуҫларӗ. Ӗнер колхоз пӗр автомашинӑпа тата 12 лавпа Йӗпреҫри хатӗрлев пунктне ҫӗнӗ тырӑ ӑсатрӗ.

Районти Маленков ячӗпе тӑракан тата «Пионер» колхозсем те государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама тытӑнчӗҫ.

А. ТУКМАКОВ.

КУВАКИНО, июлӗн 29-мӗшӗ. (Телефонпа). Колхозсенче кӗрхи тырӑсене пухса кӗртес ӗҫ хӗрсех пырать. Кашни колхоз хирӗнче жнейкӑсем, комбайнсем ӗҫлеҫҫӗ. Паянхи куна районӗпе 1.075 гектар ыраш вырнӑ.

«Новь», Киров ячӗпе тӑракан, «Красный партизан» колхозсем государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗҫ, августӑн 1-мӗшӗччен ҫирӗплетнӗ графика ирттерсе тултарчӗҫ.

Д. СИЗЫХ.

ПАРАЧКАВ, июлӗн 29-мӗшӗ. (Телефонпа). Максим Горький ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама районта пуринчен малтан тытӑнчӗ, паянхи куна Заготзерно пунктне 20 тонна ыраш леҫсе пачӗ.

Маленков ячӗпе, Жданов ячӗпе тӑракан, «Борьба за коммунизм», «Первомайск» ялхуҫалӑх артелӗсем те государствӑна ҫӗршер центнер пачӗҫ. Пӑрачкаври совхоз хатӗрлев пунктне 25 тонна ыраш леҫнӗ.

ЧУРАЧӐК. Тӑван ҫӗршыв умӗнчи пӗрремӗш тивӗҫе пурнӑҫлас тӗлӗшпе районта «Красное Сормово», «Броневик», «Динамо» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем государствӑна вуншар центнер ҫӗнӗ тырӑ леҫсе пачӗҫ.

М. ЛАНДЫШ.

Ӑмӑртакан районсенче

(Июлӗн 25-мӗшӗ тӗлне)

Улатӑр		Кувакино
1,3	Тырпул пухса кӗртнӗ (вырмаллинчен процентпа)	1,1
20,0	Силос хывнӑ (ҫулталӑкри планран процентпа)	20,0
15,0	Силос культурисем пухса кӗртнӗ (акнинчен процентпа)	—

Тырпул пухса кӗртес ӗҫре ҫав районсем республикӑра чи кая юлнӑ. Тырра кӗске срокра, тӑккаламасӑр пухса кӗртме татӑклӑ мерӑсем йышӑнни кирлӗ.

Ыраш вырса пӗтерне

СОВЕТСКИ. Колхозри пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Ф. Васильев юлташ итем ҫине пычӗ. Вӑл 3-мӗш бригадӑри колхозниксене Совет Союзӗнчи тата тӗнчери лару-тӑру ҫинчен каласа пачӗ, Корейӑра перемири туни ҫинчен пӗлтерчӗ. Секретарь, яланхи пекех, социализмла ӑмӑрту мӗнле пынипе паллаштарчӗ.

— Тырпул пухса кӗртессипе пирӗн колхоз районта малти вырӑнта пырать. Колхозри ӑмӑртура пирӗн бригада мала тухрӗ. Эсир ыраша ӑрне хушшинче вырса пӗтертӗр,—терӗ Васильев юлташ, тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте колхозниксене тата хастартарах ӗҫлеме чӗнсе.

Акӑ вӑтӑрах колхозниксен ушкӑнӗ. Вӗсем йывӑр кӗлтесене аван йываҫҫи ҫине хураҫҫӗ. Тырӑ кӑҫчен типсе ҫитет. «МК-1100» молотилкӑпа ҫапма лайӑх пулать»,—каласа парать А. Ильин колхозник. Вӑл пуҫарнипе кӑҫал вучахлӑ аван тунӑ. И. Андреев, А. Сорокин, Н. Андреев колхозниксем молотилкӑпа ҫапма кӗлте типӗтсех тӑраҫҫӗ.

Колхозниксем тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте нихҫанхинчен пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Ыраш вырнӑ вӑхӑтра вӗсем ирхине 3 сехетре ӗҫе тытӑнса мӗн тӗттӗм пуличченех ӗҫленӗ. Нормӑна тултарман тата ӗҫе тухман колхозниксем 3-мӗш бригадӑра ҫук. М. Иванов коммунист кулленхи нормӑна 140 процент тултарать. Унран пример илсе, Е. Корнилова, Е. Мартынова, С. Захарова, Н. Филиппова тата ытти колхозниксем нормӑна 130-шар процент тултарса вырнӑ.

Бригадӑра Ольга Васильева комбайнерка ӗҫлерӗ. Вӑл ыраша тирпейлӗ вырчӗ тата кулленхи задание ирттерсе тултарса пычӗ.

Е. Пучковский бригадир колхозниксен кашни кунхи ӗҫне тӗрӗс шута илсе пырать, вӗсем мӗн чухлӗ ӗҫлесе илнине каласа кӑтартать.

Хрущев ячӗпе тӑракан колхозра тырпул пухса кӗртес ӗҫе ытти бригадӑсенче те лайӑх йӗркеленӗ. Ыраша 3-мӗш бригада хыҫҫӑн 2-мӗш бригада вырса пӗтерчӗ. 1-мӗш бригадӑра пысӑк лаптӑк ҫинчи ыраша комбайнпа ытларах пухса кӗртнӗ.

Халӗ колхозниксем кӗлте кӗртсе аван ҫапаҫҫӗ. Колхозри транспорт бригади хатӗрлев пунктне ҫӗнӗ тырӑ леҫсе тӑрать. Бригада, малтанхи пилӗк кунлӑхри графика тултарса, иккӗмӗш пилӗккунлӑх шучӗпе тырӑ леҫме тытӑнчӗ. Транспорт бригади ҫумнӗ «ГАЗ-51» автомашина, лашасем тата хастарлӑ колхозниксем ҫирӗплетсе панӑ.

Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем ял ӗҫченӗсем хушшинче массӑлла-политикӑлла ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ.

Я. СИГАЕВ,
С. НАЛИМОВ.

Машинӑсемпе туллин усӑ курмалла

КАЛИНИНО. Машина-трактор станцийӗн килкартинче комбайнсемпе молотилкӑсем ретӗн-ретӗн ларни аякранах курӑнать. Вӗсем патӗнче механизаторсем тӗрмешеҫҫӗ. «Коммунар» комбайн патӗнче Фомин юлташ мотор гайкисене хытарса тӑрать.

— Фомин юлташ, халӗ те юсаса пӗтерейменӗр-им комбайна?—ыйтрӑмӑр эпир унтан.

— Пӗтерейменӗр ҫав. Запаслӑ пайсем вӑхӑтра пулмарӗҫ,—тет комбайнер.

Районти колхозсен уй-хирӗсенче хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Чылай колхозсем июлӗн 21-мӗшӗнчех ыраш вырма тытӑннӑ. Анчах та МТС килкартинче тырпул пухса кӗртмелли машинӑсене халӗ те юсаҫҫӗха. МТС килкартинче юсаса пӗтереймен «МК-1100» молотилкӑсем 4 лараҫҫӗ. МТС-ӑн 50 жнейка пур, анчах вӗсенчен 33-шне кӑна юсаса пӗтернӗ.

Машина-трактор станцийӗ тырпула уй-хиртен пухса кӗртме ҫителӗксӗр хатӗрленнӗ. МТС дирекцийӗпе пуҫламӑш парторганизаци машинӑсене вӑхӑтра юсаса хатӗрлес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ те татӑклӑ мерӑсем йышӑнман. Вӑл кӑна та мар-ха, кунта юсаса колхозсене янӑ машинӑсемпе те туллин усӑ курма тӑрӑшмаҫҫӗ. МТС-ӑн 2 комбайнӗ кӑна ӗҫлеме тытӑннӑ. Вӗсем Хрущев ячӗпе тата Свердлов ячӗпе тӑракан колхозсен уй-хирӗсенче ыраш вырса пуҫтараҫҫӗ.

— Комбайнсене ӗҫе яма ирттерех-ха, тырӑ чӗрӗ, агрегатсем кайимаҫҫӗ,—тет МТС директорӗ Волков юлташ. Ку сӑмахсем нимӗ те мар, комбайнсемпе ыраш вырнӑ ҫӗрте туллин усӑ курас мар тенипе ҫеҫ пӗлтереҫҫӗ.

Жнейкӑсемпе те ыраш вырнӑ ҫӗрте сахал усӑ кураҫҫӗ. Акӑ, Киров ячӗпе тӑракан колхозра виҫӗ жнейкӑран иккӗшӗ халӗ те тимӗрҫӗ лаҫҫи патӗнчех лараҫҫӗ. Тепӗр жнейкине юсаса пӗтернӗ, анчах унпа ӗҫлемеҫҫӗ.

Аван ҫапас ӗҫе халех организацилемелле. Апла пулин те, молотилкӑсене нумайӑшне вырнаҫтарса лартман. «МК-1100» 4 молотилка халӗ те МТС килкартинчех лараҫҫӗ, вӗсенчен иккӗшне юсама шутламаҫҫӗ.

П. ТИХОНОВ.

Малта пыракансем пек ӗҫлемелле

ЧКАЛОВСКИ. «Гвардеец» колхоз ыраш вырас ӗҫе районта чи малтан вӗҫлерӗ. Сталин ячӗпе, Киров ячӗпе тӑракан, «Правда», «Красное знамя» колхозсем те паян-ыран ыраш вырса пӗтереҫҫӗ.

Анчах та тырпул пухса кӗртес ӗҫре районти хӑшпӗр колхозсенче ҫитменлӗхсем те сахал мар-ха. «Первомайски» колхоза илер. Ӗҫ планӗ тӑрӑх, тырӑ вырма куллен 170 ҫын тухмалла, анчах та ҫак ӗҫе колхозниксем пурте хутшӑнмаҫҫӗ. Ахальтен мар кунта виҫӗ кун хушшинче пурӗ те 8 гектар кӑна ыраш вырнӑ. Колхозра хирте ӗҫлекенсем валли общественнӑй столовӑй йӗркелемен, ачасем валли ясли те ҫук. Ҫаксем ӗҫре пысӑк чӑрмав кӳреҫҫӗ.

«Первомайски» колхоза МТС-ран иккӗ эрне каялла комбайн пынӑ. Анчах та комбайн халӗ те тырӑ вырма тытӑнман, вӑл юсавлӑ мар.

И. МЕШКОВ.

Парти ӗҫӗ—пирӗн ӗҫ

Партин 2-мӗш съезчӗ ҫинчен ирттернӗ калаҫуран

Ҫӗнӗ ҫитӗнусемпе кӗтсе илеҫҫӗ штукатурщиксем паянхи куна. Николай Чернышев ертсе пыракан штукатурщиксен бригади кӑҫал ӗҫри хӑвӑртлӑха уйӑхран уйӑха малалла ӳстерсе пырать. Ҫак кунсенче, партипе ҫӗршыв РСДРП-ӑн Иккӗмӗш съезчӗ пулнӑранпа аллӑ ҫул тултарнине кӗтсе илме хатӗрленнӗ кунсенче, рабочисем уйрӑмах пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ.

— Люба,—терӗ пӗр хӗрача,—паян хамӑрӑн плана миҫе процент тултартӑмӑр-ши?

— Ӗнерхинчен кая пулас ҫук, Раиса,—терӗ Любовь Макарова,—ӗҫ ӑнса пырать.

Ӗҫ кунӗ вӗҫленчӗ. Штукатурщицӑсем киле кайма васкамаҫҫӗ-ха. Промучастокри парторганизаци секретарӗ В. Радченко юлташ вӗсене калаҫу пуласси ҫинчен пӗлтернӗччӗ.

Агитатор Николай Васильевич Чернышев штукатурщицӑсем патне вӑхӑтра ҫитрӗ. Вӗсем пир-авӑр тӗртмелли цех корпусӗ умне пухӑнса ларчӗҫ. Кунтан тӑван республика столици—Шупашкар хули ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курӑнать. Ӑҫта пӑх унта ҫӗнӗ, пысӑк та илемлӗ ҫуртсем тунине, совет ҫыннисен хастарлӑ ӗҫне курма пулать. Чӗре савӑнӑҫпа тулать.

— Юлташсем,—терӗ агитатор,—совет халӑхӗ партин Иккӗмӗш съезчӗ пулнӑранпа 50 ҫул тултарнине палӑртма пысӑк хавхаланупа хатӗрленет. Коммунистсен партийӗ халӑх ырлӑхӗшӗн, коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн ҫур ӗмӗр хушши хастарлӑн кӗрешнин итогӗсене савӑнса палӑртать.

Эпир Коммунистсен партийӗ аллӑ ҫул тултарнине ҫав тери пысӑк хаваслӑхпа палӑртатпӑр. Пирӗн тӑван Коммунистсен партийӗ совет халӑхне телейлӗ пурнӑҫ туса пачӗ.

Агитатор калаҫӑвне итлеме пайӑ ҫамрӑк работницӑсем умне Коммунистсен партийӗ утса тухнӑ историллӗ чаплӑ ҫул, кӗрешӳне аслӑ ҫӗнтерӳсен сулӗ уҫӑмлӑн тухса тӑчӗ. Агитатор Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн тата КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин институчӗн «Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ аллӑ ҫул тултарчӗ (1903—1953)» ятлӑ тезисӗсенчи чӗре патне пыракан сӑмахсене вуласа парать. Ҫак тезиссенче пирӗн партин ҫур ӗмӗр хушшинчи кӗрешӗвӗпе ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен кӗскен каласа панӑ.

Аслӑ Ленин Россиӗра пролетариатӑн революциллӗ партине тӑвас тӗлӗшпе чӑн-чӑнах улӑпла кӗрешни Иккӗмӗш съездра ҫӗнтерӳ тума май панӑ. Чылай ҫулсем хушши, иртнӗ ӗмӗрӗн тахӑрвуннӑмӗш ҫулӗсенчен пуҫласа, В. И. Ленин, Маркспа Энгельс вӗрентӗвне шанчӑклӑн малалла илсе пыраканӗ пулса, историллӗ ҫӗнӗ условисенче марксизма творчествӑлла аталантарнӑ, марксизмӑн усҫӑнах тата вӑрттӑн ӗҫлекен тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ, пролетариат вӑйӗсене революциллӗ марксизм ялавӗ айӗнче пӗрлештерессишӗн пӗтӗм вӑй хурса ӗҫленӗ.

Агитатор большевиксен партийӗ пирӗн халӑха 1917 ҫулхи Октябрьти Социализмла Аслӑ революци ҫӗнтерӗвӗ патне илсе ҫитерни ҫинчен, пирӗн Тӑван ҫӗршыври нумай миллионлӑ массӑсене творчествӑлла ӗҫе ҫӗклени ҫинчен, социализмла общество туса ҫитерни тата халӗ совет халӑхне коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне малалла шанчӑклӑн ертсе пыни ҫинчен калать.

Итлесе ларакансем хӑйсем те Коммунистсен партийӗ халӑх ырлӑхӗшӗн мӗнле пархатарлӑ ӗҫсем туса ирттернине лайӑх пӗлеҫҫӗ. Штукатурщиксен бригадинче пуринчен ытла ҫамрӑксем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем нумай пулмасть колхозсенче ӗҫленӗскерсем, халӗ ҫӗршыври чи пысӑк пир-авӑр комбиначӗсенчен пӗрине тунӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Совет влаҫӗн тивлечӗпе вӗсем, шкулсенче вӗренсе, пӗлӳсем илнӗ, комбинатра специальность тупнӑ.

Парти ертсе пынипе пирӗн юратнӑ социализмла Тӑван ҫӗршыв тунӑ ҫитӗнӳсем рабочисене ҫав тери савӑнтараҫҫӗ, тата тӑрӑшарах ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ.

Совет ҫыннисем парти политикине хӑйсен пурнӑҫ интересӗсене тивӗҫтерекен политика вырӑнне хурса хаклаҫҫӗ, ӑна пурнӑҫласишӗн активлӑ кӗрешеҫҫӗ. Пилӗкмӗш пилӗкҫуллӑх плана пурнӑҫлассишӗн кӗрешни, тет агитатор, парти политикине пурнӑҫлассишӗн кӗрешни, аслӑ тӗллеве пурнӑҫлассишӗн — коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешни пулать. Ку тӗлӗшпе пирӗн бригада мӗнле ӗҫлени ҫинчен эсир хӑвӑр та лайӑх пӗлетӗр. Пирӗн ҫитӗнӳсемпе ӑӑпланса лармалла мар, малашнехи ӗҫре тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешмелле..

Агитатор хӑйӗн калаҫӑвне вӗҫлерӗ. Итлекенсем агитатора чылай ыйтусем пачӗҫ, ҫав ыйтусем рабочисем нумай ӗҫсемпе интересленнине кӑтартса пачӗҫ. Агитатор рабочисене тухса калама, хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсем ҫинчен пӗлтерме сӗнчӗ.

Агитатор хаҫат вуласа пама тытӑннӑ вӑхӑтра пирӗн ҫума чылай ватӑрах ҫын пырса ларчӗ. Вӑл ун чухне пирӗн еннелле ҫаврӑнчӗ те пуҫланнӑ калаҫу мӗн ҫинчен пынине шӑппӑн ыйтса пӗлчӗ. «Вӑт шӑпах ҫавӑн пек калаҫусене итлесшӗн те эпӗ», терӗ ватӑ ҫын. Вӑл, ытти итлекенсем пекех, агитатор партин Иккӗмӗш съезчӗ ҫинчен каланине мӗн вӗсне ҫитиех пите тимлӗн итлесе ларчӗ.

Агитатор калаҫу вӗҫлесен, эпир ҫав кӑмӑллӑ та тирпейлӗ старикпа вӑл кам иккенне ыйтса пӗлтӗмӗр. «Кунти хураҫӑ эпӗ, Яковлев Федор», терӗ вӑл. Федор Яковлевич Яковлев вырӑнтан тӑчӗ те агитатортан сӑмах ыйтрӗ.

— Манӑн ҫакна каласа памалли пурччӗ,—терӗ вӑл лӑпкӑ сасӑпа, итлекенсем вӑррине тухса тӑрса.—Утмӑла ҫывхаратӑп. Ӗлӗкхине те хальхи пурнӑҫа та курса пӑхрӑм. Патша саманинче, паллах ӗнтӗ, пирӗн пеккисем хутла та вӗренме пултарайман, хурлӑх-шурлӑхсӑр, выҫлӑхсӑр пуҫне нимех те курман. Анчах хальхи пек телейлӗ пурнӑҫ ҫинчен яланах ӗмӗтленнӗ. Ҫак пурнӑҫа пире Коммунистсен аслӑ партийӗ туса пачӗ. Ҫавӑнпа та эпир партие чӗререн тав тӑватпӑр, ӑна тӑван парти тесе шутлатпӑр.

Федор Яковлевич пӑртак чарӑнчӗ те хула еннелле ҫаврӑнса илчӗ.—Пӑхатӑп та, хӗрӗмӗрсем, ҫак тӑван хула ҫине—шалтах тӗлӗнсе каятӑп. Палламалла мар улшӑнчӗ Шупашкар. Парти ертсе пынипе эпир Тӑван ҫӗршывра мӗн тери пысӑк ӗҫсем тӑватпӑр. Сахал-и ҫакӑн пек ҫӗнелнӗ шупашкарсем пирӗн ҫӗршывра...

Чӑн та, Шупашкар илемлӗн курӑнать ку тӳпем вырӑнтан. Хула урамӗсем тӑрӑх татти-сыпписӗр автомашинӑсем иртеҫҫӗ, илемлӗ автобуссем симӗс урамсем тӑрӑх, шап-шурӑ ҫӗнӗ ҫуртсем умӗн иртсе пыраҫҫӗ.

Пӗр предприяти килхушшинчен машинӑсен колонни тухать. Автомашинӑсем Атӑл хӗррине анса кусран ҫухалаҫҫӗ. Вӗсем Шупашкарта тунӑ япала-таварсене Атӑл ҫинчи пысӑк строительствӑна ӑсатаҫҫӗ пулас. Тавар йышӑнакан пристань умне пысӑк баржа ҫитсе чарӑнчӗ. Часах унтан таварсем турттарма тытӑнаҫҫӗ. Кусем ӗнтӗ—Тӑван ҫӗршыври ытти хуласенче тунӑ таварсем. Пассажирсем лартмалли пристаньтен пысӑк шап-шур пӑрахут тапранать. Пӑрахут васкавлӑн каять. Вӑл Тӑван ҫӗршыв ҫыннисене ҫитес тенӗ ҫӗре хӑвӑртрах ҫитерме васканӑн туйӑнать.

— Аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе, парти ертсе пынипе тунӑ эпир хамӑр ӳсӗмсене,—тет Федор Яковлевич.—Куллен ҫӗнтерӳсем тӑватпӑр эпир. Совет халӑхӗ—туслӑ ҫемье. Кӑна эпир, акӑ, хамӑр комбинат ӗҫӗнче те лайӑх куратпӑр. Вӑт ҫак ҫирӗп туслӑха вара нимӗнле тӑшмансем те ҫӗмӗрме пултараймаҫҫӗ. Пирӗн аслӑ парти ҫав туслӑха ҫирӗплетсе пырать, пирӗн вӑй-хӑвата ӳстерет. Ҫакӑ пирӗн пысӑк вӑй пулса тӑрать.

Акӑ сарӑрах чӑваш хӗрачи Любовь Макарова сӑмах илет.

— Халӑха телейлӗ пурнӑҫ туса панӑшӑн партие тав тума сӑмах та тупма ҫук вӑр. Акӑ халь кӑна Федор Яковлевич пире ӗлӗкхи асаплӑ пурнӑҫ ҫинчен аса илтерчӗ. Пирӗн асаттесемпе асаннесен, аттесемпе аннесен пурнӑҫӗ телейсӗр те мӗскӗн пулнӑ. Эпир ун ҫинчен каласа панисем тӑрӑх е кӗнекесенчен ҫеҫ пӗлетпӗр.

Эпир, телейлӗ ҫамрӑксем, совет саманинче ӳсрӗмӗр. Совет влаҫӗ ҫамрӑксене вӗренме, хӑйсен творчествӑлла вӑйӗсене кӑтартма лайӑх майсем туса пачӗ. Акӑ хамӑрах илме пулать. Эпир пурте кунта киличчен шкулсенче вӗреннӗ, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн ӗҫлеме комбината килтӗмӗр. Пирӗн чи малтанах нимӗнле специальность та пулман, халӗ ӗнтӗ нумайӑшӗ ӑста штукатурщиксем пулса тӑтӑмӑр.

Любовь Макарова совет влаҫӗ ҫулӗсенче хамӑр республикӑра пулнӑ иртнӗ пысӑк улшӑнусене те палӑртрӗ. Колхозсен анлӑ уй-хирӗсене тухсан, чун савӑнать. Сухапуҫ текех курӑймӑн ӗнтӗ унта. Хӑватлӑ машинӑсемпе ӗҫлеҫҫӗ колхоз хресченӗсем,—тет вӑл.

Юлашкинчен ҫамрӑк работница тӑван Коммунистсен партине ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнусемпе савӑнтарма шантарса каларӗ.

Бригадӑри рабочисем халӗ пурте ҫав шухӑш-кӑмӑлпа ӗҫлеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен вӗсем Коммунистсен партийӗ чӑннипех халӑх партийӗ пулни ҫинчен, уншӑн совет ҫыннин ырлӑхӗшӗн кӗрешессинчен хисеплӗрех задача урӑх ҫукки ҫинчен лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

Калаҫу пынӑ вӑхӑтра ытти бригадӑсенче ӗҫлекен рабочисем те кунта килсе ларчӗҫ. Платниксен бригадин бригадирӗ Васильев юлташ та калаҫӑва активлӑ хутшӑнчӗ. Хастар ҫамрӑк бригадир коллектива аван ертсе пырать.

Бригада пир-авӑр тӗртмелли цех корпусне тунӑ ҫӗрте ӗҫлет. Коллектив Коммунистсен партийӗ 50 ҫул тултарнине пысӑк ӳсӗмсемпе кӗтсе илет. Бригадӑри кашни рабочи кулленхи нормӑна 150—160 процент ытла тултарать. Иртнӗ уйӑхри производство планне бригада 200 процент ытла тултарнӑ, шалти резервсемпе пӗлсе усӑ курнӑ май платниксем 75 килограмм пӑта перекетленӗ.

— Пирӗн бригадӑра,—тет Васильев юлташ,—комсомолецсем малта пыраҫҫӗ. Уйрӑмах Виталий Александровпа Василий Орлов тата союзра тӑман ҫамрӑк Григорий Тувалев юлташсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем кулленхи нормӑна 200 процентран кая тултармаҫҫӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе пахалӑхне куллен ӳстерсе пыраҫҫӗ. Пирӗн бригада ҫак кунсенче тата пысӑкрах обязательство илчӗ.

Штукатурщиксен Чернышев юлташ ертсе пыракан бригади, комбинатри стройучастокра малта пыракан бригадӑсенчен пӗри шутлан[illegible] хӑйӗн производство планне уй[illegible]а ирттерсе тултарать. Ҫамрӑ[illegible]цӑсем хӑйсен квалификацин[illegible]стерсе пыраҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхра кӑна тавата ҫын пысӑкрах квалификаци илнӗ.

Коммунистсен партийӗ совет халӑхӗшӗн тимлӗн тӑрӑшнине ку бригада пурнӑҫӗсемпе ӗҫӗсенчен те курма пулать. Бригадӑри работницӑсем тухӑҫлӑ ӗҫ кунӗ хыҫҫӑн культурӑлла канма, хӑйсен пӗлӗвӗсене ӳстерме пултараҫҫӗ. Вӗсенчен нумайӑшӗ кӑҫал пир-авӑр техникумӗнчи каҫхи курса вӗренме кӗме ӗмӗтленеҫҫӗ.

Калаҫу вӗҫленеспе стройучастокри пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ В. Радченко юлташ ҫапла пӗлтерчӗ: партин Иккӗмӗш съезчӗ ҫинчен кӑларнӑ тезиссемпе ҫитес калаҫура малалла паллашмалла пулать.

Ыран та[illegible] тухӑслӑрах ӗҫлесе Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне ӳстерес ӗмӗтпе киле саланчӗҫ рабочисем. Вӗсем илемлӗ те пысӑк корпуссемпе пуранмалли ҫуртсем ӳлӗпе иртсе пыраҫҫӗ. Ку ҫуртсене нумайӑшне вӗсем хӑйсем тунӑ. Апла пулсан, вӗсен ӗҫӗ Тӑван ҫӗршывӑн пӗтӗм ӗҫне хутшӑнать, коммунизм тӑвакан совет халӑхӗн ҫӗнтерӗвӗсене ӳстерет. Улӑпран тата тӑрӑшарах ӗҫлес килет, Тӑван ҫӗршывӑн чӑн-чӑн патриотӗсем пулас килет вӗсен.

В. МАКСИМОВ,
Н. НИКИТИН.

Корейăри фронтра вăрçма чарăннă

ПЕКИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корейăри фронтран çакăн çинчен пĕлтернĕ: июлĕн 27-мĕшĕнче каçхине, вырăнти вăхăтпа 22 сехетре, Корея Халăх Çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен хĕçпăшаллă чаçĕсем пурте, Ким Ир Сен маршалпа Пын Дэ-хуэй генерал перемири çинчен панă приказа пурнăçласа, Корейăри пĕтĕм фронтра тăшмана хирĕç çапăçма чарăннă.

Пын Дэ-хуэй генерал Корейăри перемири пирки тунă килĕшӳ çине алă пуснă

ПЕКИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çакăн çинчен пĕлтернĕ:

Паян Кэсонра ирхине, 9 сехет те 30 минутра, Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэй генерал Корейăри перемири пирки тунă килĕшӳ çине тата ун çумне хушса вăхăтлăха тунă килĕшӳ çине алă пуснă.

Корейăпа Китай нейтральнăй çĕршывсене — Индие, Польшăна, Чехословакие, Швецие тата Швейцарие çыру янă

ПЕКИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăпа Китай нейтральнăй çĕршывсене — Индие, Польшăна, Чехословакие, Швецие тата Швейцарие çыру янă. Çав çырăва Кăнтăр Корейăри Ли Сын Ман правительствин заявленийĕ пирки çырнă. Ли Сын Ман правительстви çапла пĕлтернĕ: тыткăнри çар çыннисене хăйсен килĕсене ярас тĕлĕшпе ĕçлеме тивĕçлĕ нейтральнăй комисси членĕсене — Инди, Польша тата Чехословаки представителĕсене, Инди хĕçпăшаллă вăйĕсене, Индири Хĕрлĕ Хĕрес обществин çыннисене, Корейăпа Китайăн тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне тата сăнаса тăрас ĕçе тума каймалли представителĕсене Кăнтăр Корейăн территорине кĕртместпĕр, тенĕ. Асăннă представительсен Кăнтăр Корейăна каймалла, унта вĕсен тыткăнри çар çыннисене килĕсене ярас тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комиссийĕн полномочийĕсем çинчен калакан положени — Корейăпа Китай енĕ тата ООН хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ калаçса татăлса алă пуснă положени — тăрăх хăйсен обязанноçĕсене пурнăçламалла. Анчах Ли Сын Ман правительстви çав представительсене Кăнтăр Корейăна кĕртесшĕн мар.

Кун пирки Корейăпа Китай енĕ янă çырура çапла каланă:

1. Корейăпа Китай енĕ Кăнтăр Корейăри Ли Сын Ман правительствин заявленине хирĕçлет, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕмпех икĕ енĕ калаçса татăлнипе тунă килĕшĕве хирĕç пырать.

2. Корейăпа Китай енĕ акă çак шухăша хытă хӳтĕлет: тыткăнри çар çыннисене килĕсене ярас тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комиссин полномочийĕсем пирки тунă килĕшӳ тăрăх, нейтральнăй çĕршывсем янă çынсен тата Корейăпа Китай енĕн представителĕсен Кăнтăр Корея территорине пыма право пур, вĕсене ООН хĕçпăшаллă вăйĕсем, çав шутра Кăнтăр Корея çарĕ те, хӳтĕлеме тивĕçлĕ, вĕсене хăйсен полномочийĕсем çинчен каланă положенири ĕçсене туса пыма май памалла. Апла пулсан, ООН хĕçпăшаллă вăйĕсен, çав шутра Кăнтăр Корея çарĕн те, асăннă çынсене хӳтĕлес ĕçе туса тăмалла, вĕсем çав ĕçрен пăрăнма пултараймаççĕ.

КОРЕЙĂРА ПЕРЕМИРИЕ ПУРНĂÇЛАНИНЕ СĂНАКАН КОМИССИ ЧЛЕНĔСЕМ — ЧЕХОСЛОВАКИПЕ ПОЛЬША ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ КОРЕЙĂНА ТУХСА КАЙНĂ

ПЕКИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин июлĕн 27-мĕшĕнчи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корейăра перемири условийĕсене пурнăçланине сăнаса тăракан комисси членĕсем — Чехословакипе Польша представителĕсем июлĕн 27-мĕшĕнче Пекинран Корейăна тухса кайнă. Комисси членĕсем — Чехословакирен Франтишек Буреш генерал-лейтенант тата Польшăран — Мечислав Вонгровский генерал-майор Корейăна комиссире ĕçлеме уйăрнă хăйсен çĕршывĕсен çыннисемпе пĕрле кайнă. Вĕсем Корейăра перемири условийĕсене пурнăçланине сăнаса тăракан комиссин ĕçне хутшăнма тухса кайнă.

Болгари халăхĕ Корейăра перемири тунине ырлать

СОФИЯ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăра перемири туни çинчен пĕлтернине Болгари халăхĕ пысăк хавасланăхпа кĕтсе илнĕ.

Çак событи пирки «Отечествен фронт» тата «Труд» хаçатсем уйрăм статьясем пичетлесе кăларнă.

Корейăра перемири туни вăл, тесе çырать «Отечествен фронт» хаçат, Корея халăхĕпе Китай халăх добровольцĕсен пысăк çĕнтерĕвĕ пулать тата мĕнпур халăхсен тĕп интересĕсемпе килĕшсе тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ мире юрататакан, вăрçă хăрушлăхне пĕтересшĕн чунтанчĕререн тăракан çынсем мир ĕçĕн çак çĕнтерĕвĕ çинчен пĕлтерекен хыпара савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Çак çĕнтерӳ тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатмалли çула тасатать, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тавлашуллă тата халиччен татса парайман ыйтусене калаçусем иртнипе йĕркелеме май пуррине кăтартса парать.

„Тавлашуллă кирек мĕнле ыйтăва та калаçусем иртнипе татса пама пулать!"

Корейăри перемири пирки килĕшӳ туса алă пусни çинчен Венгрири хаçатсем мĕн çыраççĕ

БУДАПЕШТ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири пур хаçатсем те паян Корейăра перемири тунă пирки материалсем нумай пичетлесе кăларнă.

«Сабад нэп» хаçат: Корейăра перемири туни мир лагерĕн аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать, тесе çырать. Корейăра перемири тăвас ыйтăва калаçусем иртнипе татса пама май килчĕ пулсан, тавлашуллă ытти ыйтусене те çав майпа татса пама май пур, тесе палăртать хаçат.

Австрире вырăс чĕлхине вĕренеççĕ

ВЕНА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кремса хулинче Австри шкулĕсенче вырăс чĕлхи вĕрентекен преподавательсен икĕ эрнелĕх семинарĕ пулнă. Семинара çĕршывăн тĕрлĕ провинцийĕсенчи шкулсенче вырăс чĕлхи вĕрентекен австриец-учительсем 150 çын пухăннă. Семинара пухăннисем вырăс чĕлхи çинчен, СССР историйĕпе географийĕ çинчен тата совет литератури çинчен лекцисем итленĕ.

Польшăри хаçатсем Паньмыньжоньре перемири пирки килĕшӳ тунине ырлаççĕ

ВАРШАВА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăра перемири туни çинчен пĕлтерекен хыпара Польша халăхĕ питех те хаваслăн кĕтсе илнĕ. Польша халăхĕ Корейăра перемири тунине пĕтĕм тĕнчери мир лагерĕн калама çук пысăк çĕнтерĕвĕ тесе шутлать. Хаçатсем перемири пирки килĕшӳ туса алă пуснă май СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Ким Ир Сен патне янă телеграммăна пичетленĕ.

«Миршĕн тăрăшса тунă пысăк ĕç» ятлă статьяра «Трибуна люду» хаçат çапла çырать: Корейăра перемири туни халăхсене тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене пурне те, интереслесекен çĕршывсем ырă шухăшлă пулсан, мирлĕ майпа йĕркелеме май пуррине ĕнентерет.

Мир вăйĕсем вăрçă вăйĕсене çĕнтерчĕç

КОРЕЙĂРИ ПЕРЕМИРИ ПИРКИ КИЛĔШӲ ТУСА АЛĂ ПУСНИ ÇИНЧЕН МОНГОЛИРИ «УНЭН» ХАÇАТ МĔН ÇЫРАТЬ

УЛАН-БАТОР, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри перемири пирки çырнă килĕшӳ çине алă пусни çинчен пĕлтернине Монголи халăхĕ хапăл туса кĕтсе илнĕ.

«Корейăри перемири пирки çырнă килĕшӳ çине алă пусни тата вăрçма чарăнни, — тесе çырать «Унэн» хаçат, — нимĕнрен малтан, мир вăйĕсем тата тепĕр пысăк çĕнтерӳ тунине, вăрçă вăйĕсене çĕнтернине пĕлтерет. Анчах çакăн пирки пирĕн хамăрăн сыхăлăха хавшатма юрамасть».

„Тĕнче мирлĕ пурнăç тăвас çул çине тăчĕ!"

КОРЕЙĂРА ПЕРЕМИРИ ТУНĂ ПИРКИ ИНДИРИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ДЕЛИ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăра перемири тунă пирки Индири хаçатсем нумай çыраççĕ. «Хиндустан стандард» хаçат редакци çырнă статьяра Корейăра перемири тунине ырлать. Çавăнпа пĕрлех хаçат: «халĕ вара Ли Сын Ман та мирĕн тутлă шăршлă роза чечекĕ çинче кĕсен пек курăнать», тесе çырать.

«Хиндустан таймс» редакци çырнă статьяра, политикăлла конференци пухасси çинчен çырса, конференцие Совет Союзĕ хутшăнма тивĕçлине уйрăмах палăртать. Совет Союзĕ конференцие хутшăнсан çеç, унăн решенийĕсем витĕмлĕ пулма пултараççĕ, тет хаçат. Политикăлла конференцин Китай Халăх Республикине Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илес ыйтăва татса памалла, çакă вара Корея ыйтăвне тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи мĕнпур ыйтусене мирлĕ майпа йĕркелес ĕçре тĕп вырăнта тăрать, тенĕ статьяра.

Делире ирхине тухнă хаçатсем СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков Ким Ир Сен патне янă саламлă телеграммăна лайăх курăнмалли вырăнта пичетленĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ çакăн çинчен пĕлтернĕ: паян Карачи хулинче пулнă пресс-конференцире Инди премьер-министрĕ Неру çăмах тухса каланă. Вăл Корейăра перемири тунă пирки çапла каланă: «çакăн пек утăм туса пĕтĕм тĕнче мирлĕ пурнăç тăвас çул çине тăчĕ, çав вăхăтрах умра пысăк йывăрлăхсем нумай-ха» тенĕ. Инди перемири условийĕсене пурнăçлас ĕçе хутшăнни, çăмахран, тыткăнри çар çыннисене улăштарас тата вĕсене сыхлас ĕçе хутшăнни ун çине уйрăмах пысăк ответлăх хунине Неру уйрăмах палăртнă.

Германири Коммунистсен партийĕн Центральнăй правленийĕн секретариачĕн заявленийĕ

БЕРЛИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви паян Дюссельдорфран Германири Коммунистсен партийĕн Центральнăй правленийĕн секретариачĕ Корейăра перемири тунă пирки çырнă заявленин текстне пĕлтернĕ. Заявленире Корейăра перемири туни Корея халăхĕпе Китай добровольцĕсен пысăк çĕнтерĕвĕ, пĕтĕм тĕнчери мире юрататакан мĕнпур çынсен пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăнине палăртнă.

Корейăра перемири туни, тенĕ заявленире, нимĕç халăхĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассишĕн кĕрешмелли юхăма вăйлатма хытă пулăшать. Мĕнпур нимĕçсем пĕтĕм çĕршывра суйлавсем иртересси çинчен, Пĕтĕм Германи правительстви тăвасси çинчен тата Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен килĕшӳ тумалла тесе ыйтнине палăртса, Германири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретариачĕ çапла калать:

Халĕ ĕнтĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви пĕтĕм Германи представителĕсен канашлăвне пухас пирки панă сĕнĕве ответ памасăр хăвармалла мар. Германири Коммунистсен партийĕ калаçусем иртермелли тата килĕшӳсем тумалли çулпа кайма сĕнет пулсан, çав çул тĕрĕс çул пулнине Корейăри опыт кашни нимĕçе кăтартса пачĕ.

ООН Генеральнăй ассамблейин сессийĕ августăн 17-мĕшĕнче пухăнать

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). ООН Генеральнăй Ассамблейин председателĕ Пирсон Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕн членĕнче тăракан государствăсене телеграмма янă. Телеграммăра çапла каланă: «Генеральнăй Ассамблейăн VII-мĕш сессийĕнче йышăннă 705-мĕш резолюцин 3-мĕш пунктĕнче каланă тăрăх, Генеральнăй Ассамблейăн хальхи сессийĕ çĕнĕрен Пĕрлешнĕ Нацисен штаб-хваттерĕнче августăн 17-мĕшĕнче кăнтăрла 3 сехетре пухăнать, Корея ыйтăвне пăхса тухма çĕнĕрен тытăнать».

Итали парламенчĕ де Гаспери правительствине шанман

ПАРИЖ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Римран пĕлтернĕ тăрăх, депутатсен палатинче де Гаспери правительствине шанас пирки сасăланă. Правительствăна шанассине хирĕç 282 депутат, правительство майлă 263 депутат сасăланă. 37 депутат нихăш майлă та сасăламан. Çапла вара депутатсен палатинче правительствăна хирĕç сасăлакансем нумай пулнипе де Гаспери правительствине сирпĕтсе антарнă.

Францире промышленность производстви чакать

ПАРИЖ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Франции статистикăпа экономика институчĕн сведенийĕсем тăрăх, тесе çырать «Либерасьон» хаçат, май уйăхĕнче Францире промышленность производстви, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 5 процент чакнă. Уйрăмах электричество энергийĕ туса тăрасси нумай чакнă. Сăрт-ту промышленноçĕнче, промышленноçăн металлурги тата хими отраслĕсенче те производство хытă чакни палăрнă. Юлашки вăхăтра промышленноçăн çĕр мамăк пир-авăрĕ тĕртекен, хут тăвакан отраслĕсенче ĕçсем пăртак лайăхланнă. Анчах çакă та асăннă отраслĕсен производствине малтан пулнă шая çитиччен ӳстерме пулăшмасть, мĕншĕн тесен иртнĕ тапхăрта промышленноçăн çак отраслĕсен производстви нумай чакнă пулнă.

«Май уйăхĕ яланах производство вăйлă çĕкленнĕ уйăх шутланнă пулсан, кăçал çав уйăхра экономикăлла ĕçсем чакни палăрчĕ», тесе çырать хаçат.

Хĕвеланăç Австрире вăрçа хатĕрленес ĕç вăйланнă

БЕРЛИН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Берлинер цейтунг» хаçат Венăран пĕлтернĕ хыпара пичетленĕ. Унта, çăмахран, çапла каланă: ĕç мĕнле пулса пынине пĕлекен çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Австрири хĕçпăшаллă вăйĕсен штабне Çурçĕр Атлантика блокĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ çирĕплетнĕ план çитнĕ. Планра Австрин хĕвеланăçĕнчи территорийĕнче çар сооруженийĕсем тăвас ĕçе малалла вăйлатса пыма палăртнă. Ку план проектне Çурçĕр Атлантика блокĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ патне ярičчен унпа Австри правительствин членĕсене паллаштарнă, вĕсемпе пур ĕçсем пирки те калаçса татăлнă пулнă. Планра Хĕвеланăç Австрире стратегилле çулсем, аэродромсем, çарсем тăмалли хуласемпе казармăсем, складсем, пăшал пеме вĕренмелли вырăнсем, яланлăха çирĕп укрепленисем тума тата çар валли тăвакан ытти строительство ĕçне те пысăклатма палăртнă. Ку планра Тиролĕн, Зальцбургăн, Штирийăн, Каринтийăн сăртлă-туллă районĕсенчи кивĕ çулсемпе кĕперсене юсас, çĕнĕ çулсемпе кĕперсем тăвас ĕçе уйрăмах анлă сарма палăртнă. Çĕнĕ сооруженисем тунипе Австрири çулсене Германин кăнтăр пайĕнчи, Югославири тата Италири стратегилле çулсемпе çыхăнтармалла. Хĕвеланăç Австрие, Германин кăнтăр пайне, Югославие тата Италие Çурçĕр Атлантика союзĕн командованийĕ пĕр блок тесе шутлать.

План тăрăх, инçете вĕçме пултаракан реактивлă истребительсемпе бомбăсем пăрахакан самолетсем валли аэродромсем нумай тума палăртнă. Çав аэродромсене Çурçĕр Атлантика блокĕн совечĕн стандартлă планĕсем тăрăх тумалла. Инсбрук, Мольн районĕсенче тата Голлинг (Зальцбургран кăнтăр енче), Вальбурн, Тарвиз патĕнче аэродромсем уйрăмах нумай тăваççĕ.

Планра çар тăмалли казармăсем чылай тума палăртнă. Америка çыннисем каласа панинчен çакă палăрнă: ку планăн проектне Çурçĕр Атлантика союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн штабĕн офицерĕсемпе Америкăн Австрири хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн офицерĕсем пĕрле хатĕрленĕ.

Австрин çар министерствине тума хатĕрленнĕ май, министерствăн управленийĕсем пулмалли учреждениcене халех тунă. Çавăн пек чи пысăк управлени пулмалли учреждени вăл çуртсен иккĕмĕш управленийĕ текенскер пулать. Ку управлени чăннипе çар ĕçне туса тăрать. Çулерехре асăннă планăн проектне хатĕрлеме çав управленире ĕçлекен консультантсене те хутшăнтарнă.

Австри правительстви çар строительствин программине пурнăçлас тĕлĕшпе чылай ĕçсене хăй тума килĕшни çинчен пĕлтернĕ. Вăл тата çав строительствăсенче ĕçлеме йӳнĕ хакпа ĕç вăйĕ тупса пама пулнă.

Малайăри ĕççыннисен пурнăçĕ начарланса пырать

ПЕКИН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви Сингапуртан çакăн пек хыпар илни çинчен пĕлтерет: Америка Малайăна урăх çĕршывсемпе сыхăнса суту-илӳ тума чарать. Америкăн çавăн пек политикине пула, Малайăри ĕççыннисен пурнăçĕ начарланса пырать. Малайăри каучук плантацийĕсен хуçисен ассоциацийĕ пĕлтернĕ тăрăх, халĕ каучук промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен пĕр кунхи ĕç укçине 4 пенс чухлĕ чакарнă. Хальхинче чакарнине шутласан, юлашки çулталăк çурă хушшинче каучук промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен ĕç укçине тăваттăмĕш хут чакарнă ĕнтĕ.

Иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче предприятисен хуçисем рабочисен ĕç укçине чакарсан, Лондонри «Таймс» хаçатăн Сингапурти корреспонденчĕ çапла пĕлтернĕччĕ: «Рабочин çемйине пĕр уйăх аран-аран пурăнма сахалтан та 26 кĕренке стерлинг (Англи укçин шучĕ) кирлĕ, каучук предприятийĕнчи рабочипе арăмĕ пĕр уйăх хушши ĕçлесе 21 фунтран ытла илеймеççĕ».

Промышленность производствине сутуилӳ чакнине пула, ĕççĕр тăрса юлнă çынсен шучĕ ӳсет. Кăçалхи пĕрремĕш çурçуллăхра кăна Сингапурта ĕççĕр тăрса юлнисене 10.000 çынна яхăн официальнăй йĕркепе шута илнĕ.

Нью-Иоркри биржăра акцисен хакĕ йӳнелнĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Нью-Йоркри фондсен биржинче «Корейăра тупăсен сасси чарăннă хыççăн» акцисен хакĕ йӳнелнĕ.

Англири общинăсен палатинче

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англири общинăсен палати «Центральнăй Африка федерацийĕ» текенскерне тăвасси çинчен указ йышăннă. Указа йышăнассишĕн 288 сасă, ăна йышăнассине хирĕç 242 сасă пулнă. Федераци составне Çурçĕр Родезие, Кăнтăр Родезие тата Ньясаленда кĕртмелле тунă.

А. С. КАПЛИН

Çак çулхи июлĕн 29-мĕшĕнче «Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ тресчĕн управляющийĕ, КПСС Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн членĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ тата Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ Александр Семенович Каплин сасартăк вилсе кайрĕ.

А. С. Каплин 1899 çулта Вологда облаçĕнчи Сямшенски районĕнчи Софониха ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă.

1910 çултан пуçласа А. С. Каплин 10 çул хушши ытла вăрман хатĕрленĕ, сулă юхтарнă çĕрте, «Сокол» ятлă хут фабрикинче тата чугун çул çинче тара кĕрĕшсе ĕçлесе пурăннă. 1923—1930 çулсенче вăл суйласа лартнă вырăнсенче — ял Советĕнче, кивçен паракан юлташлăхра, волисполкомра, Вологда хула Советĕнче ĕçленĕ.

1931 çултанпа А. С. Каплин пĕрмаях Чăваш АССР-ĕнчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлерĕ. Вăл Советсен Çурчĕн строительствин начальникĕ, Атăл леш енчи торфопредприяти строительствин начальникĕ, республикăри Коммунальнăй хуçалăхăн халăх комиссарĕ, Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕ, «Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ трестĕн управляющийĕ пулса ĕçлерĕ.

Каплин юлташ 1927 çулта КПСС членне кĕнĕ. Вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членĕн ятне çӳлте тытса пынă, партипе правительствăн заданийĕсене чыслăн пурнăçланă, ĕçре пысăк хастарлăх, пуçарулăх тата организаторла пысăк пултарулăх кăтартнă.

Халăх умĕнче тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн А. С. Каплина икĕ «Хисеп Палли» орденĕпе тата «1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланă.

Каплин юлташа темиçе хутчен те КПСС Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн членне суйланă. Хула Совечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулса, вăл Советсен ĕçне активлă хутшăннă.

Коммунистсен партийĕн тата совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕн — А. С. Каплинăн ячĕ пирĕн чĕремĕрсенче яланах асра пулĕ.

Юлташсем ушкăнĕ.

КПСС Чăваш обкомĕ тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ «Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ тресчĕн управляющийĕ, КПСС Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн членĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ тата Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ

Александр Семенович

КАПЛИН

юлташ 1953 çулхи июлĕн 29-мĕшĕнче сасартăк вилни çинчен тата унăн çемйипе пĕрле хытă куляннине çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ «Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ тресчĕн управляющийĕ, КПСС обкомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн членĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ

Александр Семенович

КАПЛИН

1953 çулхи июлĕн 29-мĕшĕнче вилни çинчен тата унăн çемйипе пĕрле хытă куляннине çинчен хурланса пĕлтерет.

А. С. Каплина пытарма уйăрнă комиссирен

А. С. Каплина 1953 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче 15 сехетре пытараççĕ. А. С. Каплина пытарма уйăрнă комисси çакăн çинчен пĕлтерет: А. С. Каплин ӳтне хунă тупăка 11-мĕш вăтам шкул çуртне лартаççĕ. Унта 1953 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче 14 сехетрен пуçласа 22 сехетчен тата июлĕн 31-мĕшĕнче 11 сехетрен пуçласа 14 сехетчен кĕртеççĕ.

„Коммунизм ялавĕн" çитес номерĕ августăн 1-мĕшĕнче тухать.

Ыйтусемпе ответсем

Ыйту: Шурлăхлă вырăнсенче мĕншĕн хăшпĕр чухне çулăм пек çутă тухать?

В. Филиппов, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кузнечнăй ялĕ.

Ответ. Шурлăхсенчи тĕрлĕ ӳсентăрансен тымарĕсем тата ӳсентăрансем хăйсем те хуллен çĕрсе пыраççĕ. Вĕсем çĕрнĕ чухне тĕрлĕ газсем тухаççĕ. Газсем пĕрмаях çӳлелле хăпарса, сывлăша хутшăнса пыраççĕ. Газсем пулнипе шурлăхри сывлăш яланах шăршлă. Шурлăхсенчи хăшпĕр газсем çунма та пултараççĕ. Çĕрекен ӳсентăрансен составне фосфор кĕрет пулсан, унта фосфорлă водород текен газ пулать. Вăл сывлăша хăпарса çитсенех çунма тытăнать, урăхла каласан, сывлăшри кислородпа химилле пĕрлешет. Фосфорлă водород сахал тухса пынипе вăл çуннă чухне симĕс-кăвак çутă кăна курăнать, температура çителĕклĕ пулман пирки сывăхри çунма пултаракан япаласене вут хыпаймасть, фосфорлă водород хăй çеç çунса каять.

Шурлăхсенче тĕрлĕ чĕрчунсем — шапасем, шыв йĕкехӳрисем тата ыттисем пурăнаççĕ. Хăшпĕр чĕрчунсем путса вилме пултараççĕ. Вĕсем çĕрнĕ чухне фосфорла водород чылай тухать. Çавăнпа çак вилесем тĕлĕнче тĕттĕм çĕрле чылайччен кăвак çутă курăнать.

Ыйту. Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çаврăннă чухне пĕлĕтсем те çаврăнаççĕ-и?

М. Праулов, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тихăнушкăнь ялĕ.

Ответ. Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çаврăннă чухне ун çинчи япаласем пурте çаврăнаççĕ, атмосфера сывлăшĕ те çаврăнать. Çĕр атмосфери унпа пĕрле çаврăнмасан, Çĕр çинче питĕ вăйлă çил пулмалла. Экваторти точка кашни секундрах 460 метр ытларах хĕвелтухăç еннелле куçнине шутласа илме йывăр мар. Экваторти сывлăш вырăнтах юлас пулсан, хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăç еннелле вĕрекен çилĕн секундри хăвăртлăхĕ 460 метртан кая мар пулмалла. Кун пек вăйлă çил Çĕр çинче нихçан та пулмасть, чи вăйлă çил-тăвăл чухне те сывлăш кашни секундра хĕрĕх метра яхăн çеç куçса пырать. Яланах вĕрекен çилсен хăвăртлăхĕ кашни секундра вуншар метртан та каярах пулать.

Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çаврăннă чухне эпир хамăр та ытти япаласемпе пĕрле хĕвелтухăçнелле куçатпăр. Çавăнпа эпир Çĕр хăй тавра çаврăннине туймастпăр, сисмесĕрех юлатпăр. Çĕртен таçта аякка кайса ун çине пăхсан тин Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çаврăннине хамăр куçпах курмалла пулĕччĕ.

Атмосфера сывлăшĕ пĕр вырăнта тăмасть, яланах куçса çӳрет, хумханать. Сывлăш куçнине эпир лайăххах сисетпĕр, ăна çил тетпĕр. Пассат текен çил çинчен асăнса хăварăпăр. Тропиксем хушшинчи çĕршыва Хĕвел ытларах ăшăтнипе, унта сывлăш та ăшăрах пулать. Унта сывлăш пĕрмаях çӳлелле хăпарса пырать. Çӳлелле хăпаракан сывлăш вырăнне полюссем енчен сивĕрех сывлăш пырать. Полюссем енчен тропиксем еннелле сывлăш пĕр чарăнмасăр куçнине пассат, теççĕ. Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çаврăннипе çурçĕр полюс енчен экватор еннелле куçакан сывлăш кăштах каялла юлать те, пассат çилĕ полюс енчен тӳрех тропик еннелле вĕрмест, çурçĕр-хĕвелтухăçран кăнтăр-хĕвеланăç еннелле вĕрет. Кăнтăрти полушаринчи пассат кăнтăр-хĕвелтухăçран çурçĕр-хĕвеланăçнелле вĕрет.

Халĕ ĕнтĕ пĕлĕтсем мĕнле пулнине аса илĕпĕр. Сывлăш çителĕклĕ сивĕнсен сывлăшри шыв пăсĕнчен питĕ вĕтĕ шыв тумламĕсем е пăр татăкĕсем пулаççĕ. Вĕтĕ шыв тумламĕсем аялта Çĕр çумĕнчех пулсан, эпир ăна тĕтре тетпĕр. Тĕтре чылай çӳлелле хăпарсан, вара пĕлĕт пулать. Сывлăшри вĕтĕ шыв тумламĕсем те, пăр татăккисем те ытла вĕтĕ пулнипе аялалла питĕ хуллен анса пыраççĕ, сывлăшпа пĕрле куçса çӳреççĕ, вĕсене сывлăш хăйпе пĕрле илсе çӳрет. Çапла çумăр пĕлĕчĕсем атмосфера сывлăшĕнчен уйрăлмасăр Çĕрпе пĕрле унăн тĕнĕлĕ тавра çаврăнаççĕ, Çĕр çинчи ытти япаласемпе пĕрле хĕвеланăç енчен хĕвелтухăçалла куçаççĕ.

Ф. КУЗЬМИН.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00454 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.